28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

НОЯБРЬ 7 ЮНКУН 217 (6968) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕн, Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховнăй Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа 28 çул тултарни

В. М. Молотов юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче 1945 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă доклад

Юлташсем!

Йывăр вăрçă темиçе çул хушши пынă хыççăн, эпир паян Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнине мирлĕ лару-тăрура тата фашизма чаплăн çĕнтернĕ хыççăнхи вăхăтра уявлатпăр. (АЛĂ ÇУПАССĔ).

Гитлерла Германие хирĕç тăватă çул пынă вăрçă, пирĕн çĕршыва тата пĕтĕм Европăна хĕн кăтартнăскер, хыçа юлчĕ, çавăн пекех агрессиллĕ Японие хирĕç пынă Хĕвелтухăçĕнчи вăрçă та хыçа тăрса юлчĕ, çак вăрçа пирĕн кăçалхи кĕркунне хутшăнма лекрĕ. Совет халăхĕ татăклă вырăн йышăнса тăнă çак паттăр кĕрешĕве пула пĕтĕм тĕнчери халăхсем валли мир çĕнтерсе илнĕ, пĕтĕм тĕнчери фашизмпа пĕтĕм тĕнчери агрессин тĕп вучахĕсене—Хĕвеланăçĕнчипе Хĕвелтухăçĕнчи вучахсене—пĕтерсе тăкнă. Халĕ ĕнтĕ эпир мирлĕ ĕçе таврăнма, хамăрăн çĕнтерĕве çирĕплетсе хăварас ĕçе тытăнма май илтĕмĕр.

Сталин юлташ каланă пек:

«Пирĕн совет халăхĕ çĕнтерӳ тăвас тесе хăйĕн вăйĕпе ĕçне шеллесе тăмарĕ. Эпир йывăр çулсем пурăнса ирттертĕмĕр. Анчах халĕ ĕнтĕ пирĕнтен кашниех: эпир çĕнтертĕмĕр, тесе калама пултарать. Паянтан пуçласа эпир хамăран Тăван çĕршыва Хĕвеланăçĕнчен нимĕçсем тапăнса килес тата Хĕвелтухăçĕнчен Япони тапăнса килес хăрушлăхран çăлса хăварнă тесе шутлама пултаратпăр. Пĕтĕм тĕнчери халăхсемшĕн нумай вăхăт кĕтнĕ мир килсе çитрĕ».

I. Пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш вăрçă тата Совет Союзĕ

Пирĕн çĕршыва тапăнса кĕнĕ чухне нимĕçсем вĕсем кĕтмен çĕртен вăрă-хурахла тапăнни вĕсене ăнăçу тума май парĕ, тесе шутланă. Германире кăна мар, ытти çĕршывсенче те нумайĕшĕ çапла шутланă: Совет Союзĕ нумай вăхăт хушши тытăнса тăраймĕ, тепĕр темиçе эрнеренех,—темиçе эрнерен мар пулсан, тепĕр темиçе уйăхран пур-пĕрех,—Германи ССР Союзне аркатса тăкĕ те Гитлер çĕнтерӳ уявне уявлĕ, тесе шутланă. Малтанхи çăмăл ăнăçусем хыççăн гитлеровецсем Хĕвеланăç Европăра пурпĕрех çĕнтермелле пек туйăннă. Çакăн пек шутлама, пуринчен малтан, Российри Октябрьти Революци «законлине» йышăнман çынсем, çавăн пекех тата пирĕн революци туса хунă Совет государстви чăн-чăн халăх государстви пулнине ăнланма пултарайман çынсем пултарнă. Германи Совет Союзĕ çине тапăнса килни пирĕн ют çĕршывсенчи туссемшĕн те аслă тĕрĕслӳ пулса тăчĕ, вĕсем вăрçăн малтанхи тапхăрĕнче пирĕн çĕршыв тӳссе ирттерме çав тери пысăк йывăрлăхсене чĕрене хытарса сăнаса тăчĕç.

Совет Союзĕ, ун çине кĕтмен çĕртен тапăннă пулин те, ура çинче çирĕп тăчĕ. Вăрçăн малтанхи çулĕсенче материальнăй пысăк сиенсем курни тата ăна йывăррăн амантни унăн вăй-хăватне хавшатма пултараймарĕ. Хĕрлĕ Çар хăйĕн ĕçне урăхлатса çĕнетме тата малтанхи тапăнусене сирсе яма пултарчĕ. Совет халăхĕ хăйĕн пĕтĕм вăйне кӳлчĕ те тăшмана аркатса ямаллах пырса çапма майсем туса пачĕ. Пирĕн çар малтан фронтăн уйрăм участокĕсенче, кайран вара пĕтĕм фронтра оборонăран наступление куçнă вăхăта пурте астăваççĕ.

Харпăрхăйне хӳтĕлес интересĕсем демократиллĕ пысăк тата пĕчĕк государствăсен Гитлера хирĕçле пĕрлĕхлĕ фронтне тума хушрĕç. Паллă ĕнтĕ, Англипе Совет Союзĕн тата Америкăн коалицийĕ демократиллĕ çĕршывсен гитлеризма хирĕçле пĕрлехи кĕрешĕвне организацилес тĕлĕшпе хăйĕн историллĕ задачине ăнăçлăн пурнăçа кĕртрĕ. Паллă ĕнтĕ, Хĕвеланăç Европăра иккĕмĕш фронта уçни,—çавăн хыççăн Германи икĕ фронт хушшинчи хĕскĕче кĕрсе ӳкрĕ.—Германи фашизмĕн лару-тăруне шанчăксăр туса хучĕ. Çакăнпа пĕрлех çакна та манма юрамасть: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри татăклă улшăну иккĕмĕш фронта уçиччен пĕр çул малтанах ĕнтĕ пулнă, ун чухне гитлерла çарсем Хĕрлĕ Çар хăватлăн тата вăйлăрах та вăйлăрах хĕссе пынине пула намăслăн каялла чакма тытăнчĕç. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАССĔ).

Çапла ĕнтĕ, Октябрьти Революци тунă государство фашистсем тапăннинчен хăйне хӳтĕлесе хăварма çеç мар, тата фашизмпа агрессин тĕп вучахне пĕтерес тесе, наступлени пуçласа яма та пултарчĕ. Вара Совет влаçĕ вăл иртнĕ тĕнче вăрçи вăхăтĕнче ватăлса йӳтенĕ патша влаçĕ пек марри пуриншĕн те паллă пулчĕ.

Çапла вара, Совет государстви хăйшĕн чыслăн тăма пултарни, çĕршыв историйĕнче пулнă пур йывăрлăхсене те тӳссе ирттерме пултарни пуриншĕн те паллă пулчĕ. (АЛĂ ÇУПАССĔ).

Гитлерла Германи пĕр Совет государствине çеç хăратса тăмарĕ. ССР Союзне тапăниччен Германи фашисчĕсем Норвегие, Бельгие, Голландие, Францие, Грецие, Югославие тытса илчĕç. Хăйсен союзникĕсен хисепне нимĕçсем фашистла Италие çеç мар, Германипе вăрçă союзĕ тунă Европăри ытти хăшпĕр государствăсене те кĕртрĕç. Испани тата ытти хăшпĕр государствăсем Гитлера куçкĕретех пулăшу парса пычĕç. Гитлерла хăрушлăх Англи çине капланса килчĕ. Совет Союзне тапăнни Германишĕн ăнăçлă пулнă пулсан, Европа Гитлер аттийне кĕрсе ӳкме пултарнă пулĕччĕ.

Гитлеровецсем хăйсем Европăра туса хума хатĕрленнĕ «çĕнĕ йĕркене» тем тĕрлĕ те мухтаса пĕтернĕ. Квислингпа Лаваль йышши фашистла хӳрешкесем Германи хуçи патĕнче тăра кĕрешсе ĕçе [illegible]. Гитлеровецсем пуçпулса тăрас сен пур çĕрте те пур тĕрлĕ демократиллĕ учрежденисене те пĕтерсе лартнипе, ĕççынни класĕсен политикăллă пур прависене те пĕтерсе лартнипе пулса пынă, çавăнпа пĕрлех гитлеровецсем хăйсен фашистла йытлĕтĕвĕсене лайăхрах тытса усрас тата ытларах хĕçпăшаллантарас есе, хăйсем чуралантарнă çĕршывсенчен пур материальнăй ресурссене те пухса илнĕ. Совет Союзĕ çине тапăнса килнĕ вăхăтри малтанхи ăнăçусем гитлеровецсен пуçне татах та ытларах çавăрса янă. Вĕсем Европăра çеç мар, пĕтĕм тĕнчипе пуçпулса тăрасси çинчен те татах та усăмлăрах калаçма тытăнчĕç. Вĕсен хăрушă планĕсем—Германи расси Европăри халăхсене,—тата пĕр Европăри халăхсене çеç мар,—пăхăнтарса тăмалли авантюристла плансем пĕтĕм тĕнчешĕн паллă пулса тăчĕç. «Аслă расса» «кĕçĕн расса» шутне кĕртнĕ ытти халăхсене пăхăнтарса тăмалла текен Германири фашистла теори Европăри цивилизацин кун-çулне тӳрремĕнех хăратса тăракан хăрушлăх пулчĕ.

Гитлерла вăрă-хурахсем çĕмĕрсе кĕнĕ çĕршывсем фашистла захватчиксене хирĕç тăма начар хатĕрленнĕ пулнă. Чи лайăх патриот-демократсем тăрăшса ĕçленине пула, ерипен-ерипенех вара захватчиксене хирĕç кĕрешекен демократиллĕ вăйсем пĕтĕçсе çитĕнме тытăнчĕç. Захватчиксене хирĕç восстани тăвакансене пĕтĕм халăх пулăшса пынă Югослави йышши çĕршывсенче те гитлеризмăн вăрçă тĕлĕшĕнчи хăватлăхне çапса хуçма вăй çитереймен. Вара пирĕн çар наступлени пуçласа ярса Германи çарĕсене аркатма тытăнсан, вĕсен пире çĕнтересенни никам та çук текен суя чаппине сирсе пăрахнă хыççăн, Германи империализмĕ чуралантарнă халăхсемшĕн ирĕке тухмалли анлă майсем уçăлчĕç. Хĕвеланăç еннелле куçса пынă май, Хĕрлĕ Çар пирĕнпе кӳршĕллĕ çĕршывсене тата Европăри ытти халăхсене те ирĕклĕх кӳрсе пачĕ. Совет çарĕсем союзниксен çарĕсемпе пĕрле халĕ Европăри çĕршывсене ирĕке кăларакансем пулса тăчĕç, çав ирĕке кăларнă çĕршывсен шутне ĕнтĕ Германипе çыхăну тытма пăрахса гитлеризма пĕтерсе тăкассишĕн кĕрешекенсен ретне тăнă çĕршывсем те кĕреççĕ.

Çапла ĕнтĕ, Европăри çĕршывсене гитлеризм пусмăрĕнчен ирĕке кăларни пирĕн çĕнтерӳллĕ Хĕрлĕ Çарăн историне мухтавлă страница пулса кĕрсе юлать. (ТĂВАЛЛĂН АЛĂ ÇУПАССĔ).

Фашистла Итали Европăра вăрçă пуçласа янă Германи майлă пулса чи малтан вăрçа хутшăнчĕ. ССР Союзне тапăннă вăхăт тĕлне Румыни, Венгри, Финлянди правительствисем, гитлерла Германипе вăрçă союзĕ туса, хăйсен çĕршывĕсене Совет Союзне хирĕç пыракан вăрçа хутшăнтарса ячĕç. Ун чухне Гитлер агенчĕсенчен тăракан правительствăллă Болгари те Германипе пĕр союзрах пулса тăчĕ. Çапла ĕнтĕ, уйрăм çĕршывсене илмесен, Европăри фашистла режимлă çĕршывсем тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче хăйсен кун-çулне гитлерла Германин кун-çулĕпе çыхăнтарчĕç. Çавăнпа та ĕнтĕ Германи парăнни пĕр Германи фашизмĕ парăннине çеç пĕлтермест. Вăл Европăри ытти çĕршывсенче те фашизм парăнасси патне илсе пычĕ.

Çапла ĕнтĕ, пирĕн çĕнтерĕвĕн пĕлтерĕшĕ çине Германи фашизмне çапса аркатни енчен кăна мар, çавăн пекех фашизма мĕнпур Европăра вăрçă тĕлĕшпе тата моральпе политика тĕлĕшпе çапса аркатни енчен те пырса пăхмалла. (АЛĂ ÇУПАССĔ).

Европăри вăрçă пĕтнĕ хыççăн, мĕнпур тĕнчере мир туса хурассине хăвăртлатас тесе, союзлă державăсем умне Хĕвелтухăçĕнче Япони агрессине пĕтерсе тăкас задача тухса тăчĕ. ССР Союзĕпе унăн союзникĕсем хушшинче пĕр-пĕрин умĕнче обязательствăсем пулнă пирки те, çавăн пекех тата Хĕвелтухăçĕнче хамăрăн хăрушсăрлăхăн интересĕсем питĕ хытă хушнă пирки те Совет Союзĕ çав задачăна татса парассинчен аякра тăрса юлма пултараймарĕ. Эпир пурте çакна астăватпăр: Япони пирĕн çĕршыва ĕлĕкренпе пĕр хутчен мар тапăннă, Хĕвелтухăçĕнче вара пирĕн государствăшăн пĕрмаях Япони тапăнса кĕрес хăрушлăх тăнă. Çавна пула ĕнтĕ Совет Союзĕн ирĕксĕрех Япони хирĕç вăрçа тухма тиврĕ. Çакна ăнланса илме йывăрах мар: Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче Германи фашизмĕ поражени хыççăн поражени тӳсме тытăнсан, Хĕвелтухăçĕнче Япони агрессийĕ мĕнпе пĕтесси паллă пулса тăчĕ. Юлашкинчен, Японие хирĕç вăрçа тухса, Совет Союзĕ унăн пораженине хăвăртлатрĕ, çапла вара Хĕвелтухăçĕнче вăрçă пĕтессине те хăвăртлатрĕ.

Япони, гитлерла Германи çулĕпе кайса, союзниксене парăнчĕ. Германи империализмĕн Европăра пуçпулса тăмалли планĕсем кăна мар, çавăн пекех тата Япони империализмĕ Азире пуçпулса тăма ĕмĕтленнисем те путланса ларчĕç. Анчах унччен нумаях та пулмасть хĕвеланăçĕнчи фашистсем те, çавăн пекех хĕвелтухăçĕнчисем те çав плансене пĕтĕм тĕнчере пуçпулса тăрас ĕçĕн малтанхи тапхăрĕ тесе кăна шутланă пулнă-ха, çапла вара вĕсем хăйсен примерĕпе çавнашкал агрессиллĕ ĕмĕтсем пирĕн вăхăтра мĕн тери айванла та авантюристла ĕмĕтсем пулнине кăтартса парĕç. Хĕвелтухăçĕнчи фашизмпа агрессин тĕп вучахĕ пулса тăракан Япони империализмĕ поражени тӳсни тата Китая Япони захватчикĕсенчен ирĕке кăларни Азири çĕршывсем,—тата Азири çĕршывсем çеç те мар,—демократиллĕ аталанса пырас тĕлĕшпе çав тери пысăк та паха вырăн йышăнса тăрать. Çав çĕнтерĕве çирĕплетсе хăварасси мĕнпур демократиллĕ çĕршывсен интересĕ пулса тăрать. Çавăнпа Япони парăнса йышăннă условисене союзлă тĕп державăсем енчен тивĕçлипе контроллесе тăрасси пирки союзниксем пĕр-пĕрин хушшинче калаçса татăлассине Совет Союзĕ питĕ пысăк вырăна хунине ăнланмалла та ĕнтĕ. Ку ыйтура тухса тăнă йывăрлăхсене пĕтермен-ха. Анчах Совет Союзĕ агрессиллĕ Японие çĕнтернине çирĕплетсе хăварма тата çавăн валли союзлă державăсем хушшинче пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлемелли тивĕçлĕ условисем туса хума кирлине мире юратакан мĕнпур державăсем ăнланса илнĕ, тесе шанса тăрать.

Германин те, çавăн пекех Японин те союзниксене пĕр сăмахсăрах парăнмалла пулчĕ. Çапла вара Англипе Совет Союзĕн тата Америкăн коалицийĕ хăй тытнă ĕмĕте пурнăçа кĕртрĕ. Пирĕн çĕршыв çыннисем халĕ ĕнтĕ çакна кăмăллăн ăнланса тăраççĕ: тĕнчери иккĕмĕш вăрçа демократиллĕ çĕршывсен интересĕсем майлă çĕнтерӳпе пĕтерес ĕçре тата, уйрăмах, фашизмпа агрессин чи хăрушă вучахне—гитлерла Германие пĕтерсе тăкас ĕçре Совет Союзĕ татăклă вырăн йышăнса тăчĕ. Совет халăхĕ хăй гитлерла Германие хирĕç туса пынă вăрçа Отечественнăй аслă вăрçă тесе ят пачĕ. Совет халăхĕн примерĕнчен ытти çĕршывсен патриочĕсем хăйсен тăван çĕршывĕшĕн, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн мĕнле кĕрешмеллине вĕренсе пычĕç. Тата çакă та паллă: совет халăхĕ хăйĕн çĕршывне ирĕке кăларчĕ кăна мар, çавăн пекех вăл мĕнпур Европăра мирпе ирĕклĕх туса хурассишĕн геройла кĕрешсе пычĕ.

Çулталăк каярах Сталин юлташ çапла каланăччĕ:

«Халĕ ĕнтĕ пурте çакна йышăнаççĕ: совет халăхĕ, хăйĕн вăйне хĕрхенмесĕр кĕрешсе, Европăри цивилизацие фашистла арнатуçăсенчен çăлса хăварчĕ. Çакăнта ĕнтĕ совет халăхĕн этемлĕх историйĕ умĕнчи тава тивĕçлĕ аслă ĕçĕ». (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАССĔ).

II. Пĕтĕм тĕнчере мир туса хурасси тата мире юратакан халăхсен интересĕсем

Тĕнчери иккĕмĕш вăрçă тĕнчери пĕрремĕш вăрçăран нумай енĕпе уйрăлса тăчĕ, пуринчен малтан, çак вăрçа халăхсем çав тери йышлăн хутшăнни тĕлĕшпе, çавăн пекех çынсем питĕ йышлăн пĕтни тата вăрçă кӳнĕ материальнăй сиенсем тĕлĕшпе те уйрăлса тăчĕ. Çĕр чăмăрĕ çинчи халăхăн пилĕк пайĕнчен тăватă пайĕ хăшпĕр таран тĕнчери юлашки вăрçа хутшăнчĕ. Пĕр-пĕринпе вăрçакан икĕ лагерьте мобилизациленĕ çынсен йышĕ 110 миллионран та иртрĕ. Çав çулсенче чăннипех нейтральнăй çĕршыв пулнă çĕршыва кăтартса пама та май çук пекех темелле. Тĕнчери иккĕмĕш вăрçа пуçланса кайма ирĕк панине пула, урăхла каласан, хăйĕн пысăкĕшĕпе халиччен курман çак вăрçа пуçласа яракан фашизмăн агрессиллĕ вăйĕсене хирĕç вăхăтра мерăсем йышăнманнине пула, этемлĕх çынсен пурнăçĕсен шутласа кăларма çук хакĕпе тата нумай государствăсем арканса кайнин хакĕпе тӳлерĕ.

Пирĕн халăха вăрçа ирĕксĕр туртса кĕртрĕç, вăл вара çав тапăнăва хирĕç Отечественнăй аслă вăрçă пуçласа ячĕ. Гитлерла Германи пирĕн территорие тытса илас тата Совет государствине пĕтерсе тăкас ĕмĕтпе кăна мар Совет Союзĕ çине килсе тапăнчĕ. Гитлеризм вырăс çыннисене тата славянсене вĕлерсе пĕтерессине хăйĕн тĕллевĕ тесе пĕлтерчĕ. Малашне, вырăс халăхĕ, çавăн пекех Совет Союзĕнчи ытти халăхсем те, Сталин юлташ «Йăлтах фронтшăн» тесе чĕннипе хăйсен ĕçне пĕтĕмпех урăхлатса йĕркеличчен, юлашкинчен тата Германи çарĕн çурăм шăммине çапса хуçаччен, урса кайнă гитлеровецсем хăйсен этемлĕхе курайман тĕллевĕсене хăйсем тытса илнĕ территорисем çинче пурнăçа кĕртсе пынă чух нимĕн умĕнче те чарăнса тăмарĕç. Çавăн çинчен манни пĕр айăпсăр пĕтнĕ миллионшар çынсем умĕнче, вĕсен тăлăха юлнă çемьисем умĕнче, пĕтĕм халăх умĕнче преступлени туни пулнă пулĕччĕ. Нимĕç захватчикĕсемпе вĕсен союзникĕсем, совет территорийĕ çинче нумай уйăхсем хушши вăрă-хурахла ĕçсем туса, пире мĕн тери пысăк материальнăй сиен кӳни çинчен те манма çук. Çавсемшĕн пуриншĕн те çак вăрçăн тĕп преступникĕсем пуринчен малтан ответ тытма тивĕçлĕ.

Фашистла нимĕç оккупанчĕсем 1.710 хулана тата 70 пин ытла яла пĕтĕмĕшпех е пĕр пайне аркатса тăкнă е çунтарса янă, 6 миллион çурта çунтарса янă е ишĕлтерсе пĕтернĕ, 25 миллион çынна яхăн килсĕр-çуртсăр тăратса хăварнă. Арканнă тата уйрăмах пысăк сиен курнă хуласем хушшинче çĕршывăн чи пысăкрах промышленноçпа культура центрĕсем—Сталинград, Севастополь, Ленинград, Киев, Минск, Одесса, Смоленск, Харьков, Воронеж, Дон çинчи Ростов тата ытти нумай хуласем пур. Гитлеровецсем промышленноçăн 31.850 предприятине аркатса тăкнă е сиенленĕ, çав предприятисенче 4 миллиона яхăн рабочипе служащи ĕçленĕ пулнă. Гитлеровецсем 98.000 колхоза, вăл шутра Украинăпа Белоруссири нумай колхозсене ишĕлтерсе çаратса пĕтернĕ. Вĕсем 7 миллион лашана, 17 миллион пуç ĕне выльăха, вуншар миллион сыснапа сурăха пусса пĕтернĕ, туртса илсе Германие илсе кайнă. Халăх хуçалăхĕпе пирĕн граждансене тӳрремĕн кӳнĕ сиен кăна Чрезвычайнăй Государственнăй Комисси 679 миллиард тенкĕ (государство хакĕпе) пулать тесе палăртрĕ.

Эпир çаксем çинчен манма пултараймастпăр тата вăрçа пуçласа янă çĕршывсенчен вĕсем кӳнĕ сиенĕн пĕр пайне те пулин шыраса илме тивĕçлĕ. Совет халăхĕн çак ĕмĕчĕ тĕрĕсси пирки тавлашма çук. Тата çакна асăрхаттармасăр та иртсе кайма юрамасть: виçĕ державăн Берлинри конференцийĕ Германиран вăрçă тăкакĕсене шыраса илесси çинчен йышăннă решенисем ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пымаççĕ-ха.

Анчах аяла пулнă халăхсем тĕлĕшпе тавăру политикине тытакан çынсем пирĕн хушăра çук. Тавăру туйăмĕ, çавăн пекех тарăхтарнăшăн вĕчĕхес туйăм политикăра тата халăхсем хушшинчи çыхăнусенче начар советниксем пулса тăнине Сталин юлташ пĕр хутчен мар кăтартса панă. Вăрçăра аяла пулнă халăхсем тĕлĕшпе пире тавăру туйăмĕ мар ертсе пымалла, пирĕн çĕнĕ агресси сиксе тухассине чăрмантарас тата çĕнĕрен сиксе тухма пултарас агрессорла халăхсем хушшинче май килнĕ таран ытларах пĕчченлĕтсе хăварас ĕмĕтпе ĕçлемелле. Пире иртнишĕн тарăхни мар, вăрçă хыççăнхи тапхăрта мирпе халăхсен хăрушсăрлăхне упраса тăрас интересем ертсе пыма тивĕçлĕ.

Паллах, çирĕп мире упраса тăрасси мире юратакан халăхсене тивĕçлĕ хĕçпăшаллă вăйсем тытса тăма хушать. Çакă вăл, кирек мĕнле пулсан та, мире упраса усрассишĕн хăйсем çинче тĕп ответлăха тытса тăракан çĕршывсене пырса тивет. Анчах мире упраса тăрас интересемпе аслă державăсем хĕçпăшала хăвăрттăн ӳстерес тĕлĕшпе тытакан политика хушшинче нимĕнле пĕрлĕх те çук. Халĕ çав политикăна чикĕ леш енче империализм политикишĕн уйрăмах хастаррăн тăракан хăшпĕр çынсем сарса пыраççĕ. Çакна май атом энергине тупни пирки тата атом бомби пирки каласа хăвармалла. Çав бомбăпа Японие хирĕç пынă вăрçăра усă курни унăн аркатакан çав тери пысăк вăйне кăтартса пачĕ. Анчах атом энергине агресси сиксе тухассинчен асăрханас е мире упраса усрас тĕлĕшпе тĕрĕслесе пăхман-ха. Тепĕр енчен, хальхи вăхăтра техникăллă пысăк вăрттăнлăхсем мĕнле те пулин пĕр çĕршывăн е уйрăм çĕршывсен пĕр-пĕр пысăк мар ушкăнĕн аллинче кăна юлма пултараймаççĕ. Çавăнпа та атом энергине тупни тулашри политикăллă вăйсен вăйĕнче çав открытипе усă курма ытлашши тăрăшнине те, мире юратакан халăхсен пуласлăхĕ пирки тимлĕхсĕр пулнине те хавхалантарма пултараймасть.

Тулашри пĕр паллă интересене хӳтĕлемелли хатĕр вырăнне государствăсен блокĕсемпе ушкăнĕсене тăвасси çинчен те нумай шавлаççĕ. Совет Союзĕ мире юратакан ытти государствăсене хирĕçле державăсен ушкăнĕсен ĕçне нихăçан та хутшăнман. Хĕвеланăçĕнче, паллă ĕнтĕ, çавăн пек ĕçсене темиçе хутчен те туса пăхнă. Ĕлĕкрех тунă çавăн пек ушкăнсен Совет Союзне хирĕçле ĕçĕсене те пурте пĕлсе тăраççĕ. Кирек епле пулсан та, хĕвеланăçĕнчи державăсен блокĕсемпе ушкăнĕсен историйĕсем пире çав блоксемпе ушкăнсем агрессорсене чарас ĕçе мар, пачах та урăхла, агрессорсене, чи малтанах Германие, хавхалантарас ĕçе пулăшса пынине кăтартса параççĕ. Çавăн пирки те Совет Союзĕн тата мире юратакан ытти государствăсен çак тĕлĕшпе сыхăлăха чакарма юрамасть.

Пĕтĕм тĕнчере мир туни çĕршывсем хушшинчи вăрçăччĕнхи лару-тăрăва каялла тавăраймарĕ, тавăрма та пултараймасть. Германи, Итали тата Япони пĕтĕм тĕнчери пĕтĕмĕшле пурнăçа йĕркелесе пыракан аслă çĕршывсен шутĕнчен паллă мар вăхăтлăха тухса ӳкрĕç. Çапла ĕнтĕ, çав çĕршывсен агрессилĕхĕ çĕнĕрен пуçланассине чарса пырас тесе, анчах та çакăнпа пĕрлех вĕсене мире юратакан демократиллĕ государствăсем пулса малалла аталанса пыма кансĕрлес мар тесе, союзниксен пĕрле çав çĕршывсене тĕрĕслесе тăмалла пулать-ха. Фашистла тата çурмафашистла государствăсем демократиллĕ çул çине тăрса, халĕ союзлă государствăсемпе туслă çыхăнусем тытма тăрăшни те Европăн пуласлăхĕнче пĕчĕк мар вырăн йышăнса тăрать. Çав государствăсенчи демократиллĕ пуçарусене çирĕпленме кансĕрлесе пыма мар, пулăшса пыма кирли паллă пек туйăнать.

Союзлă çĕршывсен лагерĕнче те вăрçă пысăк улшăнусем тунине асăрхаттармасăр иртсе кайма çук. Кунта реакциллĕ вăйсене ĕлĕкхи позицисенчен чылаях сирнĕ, кивĕ тата çĕнĕ демократиллĕ партисем валли çул тасатса панă. Европăри чылай çĕршывсенче пысăк социальнăй реформăсем тунă: помещиксем çĕре тытса тăмалли кивелнĕ йĕркене пĕтерсе, çĕре сахал пурлăхлă хресченсене валеçсе панă, çакă ĕнтĕ реакциллĕ-фашистла вăйсен ĕлĕкхи тĕревне хавшатать, çав çĕршывсенчи демократиллĕ тата социализмлă юхăмăн ӳсĕмне хавхалантарса пырать. Хăшпĕр государствăсенче халĕ шултăра промышленноçа национализацилес, 8 сехетлĕ ĕç кунĕ çине куçас тата экономикăра ытти йышши паха реформăсем тăвас ыйтăва кун йĕркине кăларса тăратнă, çакă ĕнтĕ Европăри тата Европа тулашĕнчи демократиллĕ ӳсĕе пыракан юхăма çĕнĕ шухăш-кăмăлла шанчăк парать. Реакциллĕ хăшпĕр хаçат-журналсем çакăн пек демократиллĕ хăюллă реформăсем тунине, чи малтанах, Совет Союзĕн влиянийĕ ӳсни çине тӳнтерме хăтланаççĕ. Çавăн пек калани тĕрĕс марри ахалех лайăх курăнса тăрать.

(Юлашки 2-мĕш страницăра).

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа 28 çул тултарни

В. М. Молотов юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче 1945 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă доклад

Юлашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра.

мĕншĕн тесен Европăри малта пыракан çĕршывсенче çавăн йышши проблемăсене ĕлĕк те ăнăçлăн татса панă тĕслĕхсем пуриншĕн те паллă.

Çакă вăл фашизм вăйне татăкланах пĕтерсе тăкнине, ăна урăх шута илме те кирлĕ маррине пĕлтермест-ха. Эсир виçĕ державăн Крымри Декларацинче ирĕке кăларнă Европа çинчен мĕн каланине пурте вуланă, унта çапла калаччĕ: «Европăри йĕркене тата нацисен экономикăллă пурнăçне урăхлатса çĕнетессине ирĕке кăларнă халăхсем нацизмпа фашизмăн юлашкийĕсене пĕтерме тата хăйсем суйласа илнĕ тăрăх демократиллĕ учрежденисем уçма май илччĕр тесе тумалла». Крымри Декларацие тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пырас тесен, татах та нумай ĕçлеме тивет-ха. Анчах та, кăмăла кайман енсем те пур пулин те, фашизма хирĕç пынă кĕрешÿ пирĕн çĕнтерÿпе пĕтни Европăри политикăллă сывлăша тасатса пани пирки, фашизма хирĕçле вăйсене çĕнĕрен çĕкленсе нихăçанхи пек мар вăйлăн аталанса пыма çĕнĕ çулсем уçса пани пирки нимĕн иккеленмелли те çук. Çакăн пек ларутăру, паллах ĕнтĕ, мире юратакан государствăсен интересĕсене тивĕçлĕ пулать, çавăнпа та Европăри халăхсен шухăш-кăмăлĕнче «нацизмпа фашизмăн юлашкийĕсене пĕтерме кирлине» ăнланса илни татах та ытларах вăйланса пытăр тесе тăрăшмалла.

Совет Союзĕ мире юратакан пур государствăсем хушшинче те йĕркеллĕ çыхăнусем тытса пырас политикăна яланах тĕрĕс пурнăçа кĕртнĕ. Вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзĕ Великобританипе тата Пĕрлешÿллĕ Штатсемпе, Франципе тата Китайпа, Польшăпа, Чехословакипе тата Югославипе туслă çыхăнусем тытма пуçларĕ,—çав пур çĕршывсемпе те тенĕ пекех пирĕн халĕ союз çинчен тата тĕнчери юлашки вăрçăра тĕп агрессорсем пулнă çĕршывсем çĕнĕрен тапăнас-тăвас пулсан пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен нумай çуллăха тунă договорсем пур. Совет Союзне шанмасăр тăма тата тăшманла политика тытма пăрахнă ытти çĕршывсемпе те лайăх çыхăнусем тытса пырас тата çав çыхăнусене йĕркелес тĕлĕшпе эпир мĕн кирлине пурне те тăватпăр. Суту-илÿпе экономика тĕлĕшĕнчен ют çĕршывсемпе çыхăну тытассине ытларах та ытларах аталантарса пыни те çав ĕçе тунинех пĕлтерет. Вĕсемпе культура тĕлĕшĕнчен çыхăну тытасси те вăйлансах пырать.

Халĕ ĕнтĕ вăрçă вăхăтĕнче Гитлера хирĕç пуçланса кайнă Англи, Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕн çирĕплĕхне тĕрĕслесе пăхаççĕ. Çĕнĕ условисенче, вăрçă хыççăнхи çĕнĕ те çĕнĕ проблемăсем тухса тăнă вăхăтра, çав коалици малтанхи пекех вăйлă пулĕ-и, вăл ыйтусене пĕр-пĕринпе килĕштерсе татса пама пултарĕ-и? Пилĕк министрăн Лондонри канашлăвĕ ăнăçсăр пулни ку тĕлĕшпе паллă асăрхаттарусем кăларса тăратать. Анчах та Англипе Совет Союзĕн тата Америкăн коалицийĕн вăрçă вăхăтĕнче те йывăрлăхсем пулман мар. Чылай чухне виçĕ державăн коалицийĕ черетри задачăсене Гитлера хирĕçле пĕчĕк тата шултăра государствăсен коалицийĕн интересĕсемшĕн тĕрĕс татса пама пултарчĕ, çав вăхăтрах вăл демократиллĕ аслă державăсем малашне те пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеме кирлине шута илсе пычĕ.

Кăçал тата «Пĕрлешнĕ Нацисем» ятлă пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ организаци туса хунă. Ăна Англипе Совет Союзĕ тата Америка коалицийĕн пуçарăвĕпе тунă, çавăнпа вара çав коалици «Пĕрлешнĕ Нацисен» малашнехи ĕçĕсен результачĕсемшĕн тĕп ответлăха хăй çине илчĕ. «Пĕрлешнĕ Нацисем» текен организаци Нацисен Лигийĕ пек мар, урăхла пулмалли пуриншĕн те паллă. Нацисен Лигийĕ агрессие хирĕç тăма тата пуçланса кайнă агрессие хирĕç вăйсене организацилеме пачах та пултараймарĕ. Çĕнĕ организацин, çавăн пекех, пĕр-пĕр аслă державăн хĕçпăшаллĕ те пулса тăмалла мар, мĕншĕн тесен пĕр-пĕр уйрăм государство тĕнчери пĕтĕмĕшле ĕçсене ертсе пыракан вырăна йышăнма хапсăнни вăл, тĕнчере пуçпулса тăма ĕмĕтленни пекех, тĕрĕс япала мар. Вăрçăн йывăрлăхне хăйсен хулпуççийĕсем çинче йăтса тухса демократиллĕ çĕршывсем фашизма çĕнтермелле тунă державăсем пĕрле тăрăшса ĕçлени çеç, çавăн пек пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлени çеç вăрăм вăхăтлăха мир тăвас тĕлĕшпе пĕтĕм тĕнчери çĕнĕ организацин ĕçĕсене ăнăçлă тума пултарать. Çакна тăвас тесен, ырă шухăш-кăмăла каласа пани çеç çитеймест. Унсăр пуçне мире юратакан мĕнпур государствăсен интересĕсемшĕн çавăн пек пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеме пултарнине чăннипе кăтартса памалла. Совет Союзĕ халăхсен мирĕпе хăрушсăрлăхне хÿтĕлес тĕлĕшпе шанчăклă тĕрек пулнă, малашне те çавăн пекех пулĕ, çакна вăл сăмахпа çеç мар, ĕçре те кăтартса пама хатĕр. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇАПАÇÇĔ).

III.

Совет государствин малалла тĕреклетесси тата совет демократине аталантарасси

Германие хирĕç тăватă çул хушши пынă вăрçă Совет государствин мĕнпур вăйĕсене тĕрĕслесе тухрĕ. Совет Союзĕ çав тĕрĕслеве чыслăн тÿссе ирттерчĕ. Аслă та вилĕмсĕр Ленин сăмахĕсем çĕнĕрен пурнăçа кĕчĕç:

«Рабочисемпе хресченсен ытларахăшĕ хăйсен Совет влаçне—ĕççыннисен влаçне хÿтĕленине, вĕсем хăйсене тата хăйсен ачисене культурăн мĕнпур ырлăхĕсемпе, этем алли тунă мĕнпур пуянлăхсемпе усă курма май паракан ĕç çĕнтерессишĕн кĕрешнине пĕлсе, туйса тата курса тăракан халăха никăçан та никам та çĕнтерме пултараймасть». (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Хĕрлĕ Çар вăрçăран çĕнтерÿçĕ чапне илсе тухрĕ. Вăл, хĕçпăшаллă вăй пулса тăрса, ÿссе тĕреклĕнчĕ, хăйĕн советлă вăй-хăвачĕпе татах та ытларах вăйлăланчĕ. Унăн речĕсенчен халĕ киле, мирлĕ ĕçе, миллионшар çын таврăнать. Вĕсем пирĕн колхозсене, фабрикăсемпе заводсене тата халĕ социализм строительствине çĕнĕ вăй-хăватпа çĕклес аслă задачăсене пурнăçа кĕртме тытăннă пирĕн Тăван çĕршыва çав тери кирлĕ. Совет халăхĕ халĕ хăйĕн партийĕ тавра нихăçанхи пек те мар таччăн пĕтĕçсе тăрать, вăл Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе йĕркеллĕ те çирĕп ретсемпе малалла пырать. Йывăр вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çарпа совет халăхне Совет Союзĕн аслă та тĕрĕсленнĕ çулпуçĕ—Аслă Сталин ертсе пыни—пирĕн телей. (НУМАЙЧЧЕН ТĂВĂЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ. ПУРТЕ УРА ÇИНЕ ТĂРАÇÇĔ). Генералиссимус Сталин ячĕпе пирĕн çĕршыв историне тата пĕтĕм тĕнче историне пирĕн çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем кĕрсе юлаççĕ. (НУМАЙЧЧЕН ТĂВĂЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ). Аслă çулпуç тата организатор Сталин ертсе пынипе, социализм обществин вăйĕсене чăннипех чечеклентерес тата пирĕн пĕтĕм тĕнчери туссен чи лайăх шанчăкĕсене тÿрре кăларас тесе, эпир халĕ мирлĕ строительство ĕçне тытăнтăмăр. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

ССР Союзĕн пĕтĕм тĕнчери авторитечĕ мĕнле вăйлăн ÿснине пурте пĕлеççĕ. Çака вăл пирĕн çĕршыв вăрçăра, экономикăра тата политикăра тунă çитĕнÿсене пула çавăн пек пулчĕ. Çулталăк каярах Сталин юлташ ăна çак сăмахсемпе палăртрĕ:

«Хĕрлĕ Çар, нумай вăхăт хушши пĕр пĕччен йывăр кĕрешÿ туса пырса, фашистла çарсене вăрçă тĕлĕшпе çĕнтерни пекех, совет тылĕнчи ĕççыннисем, гитлерла Германие тата унпа пĕр кагарлисене хирĕç пĕччен тăрса кĕрешсе, тăшмана экономика тĕлĕшĕнчен çĕнтерчĕç».

Сталин юлташ тата çавăн пекех çапла каларĕ: «Вăрçă пынă вăхăтра гитлеровецсем вăрçă тĕлĕшпе кăна мар, моральпе политика тĕлĕшĕнчен те поражени тÿсрĕç», терĕ. Пирĕн çĕршыв экономика тĕлĕшĕнчен мĕн тери ÿссе çирĕпленнине вăрçă пурне те кăтартса пачĕ. Вăрçă тата Совет Союзĕ ытти халăхсен куçĕ умĕнче моральпе политика тĕлĕшĕнчен ÿснине те унтан сахал мар кăтартса пачĕ.

Вăрçăн малтанхи çулĕсенче эпир экономика тĕлĕшĕнчен çав тери пысăк йывăрлăхсем тÿсрĕмĕр, анчах çапах та пирĕн çĕршыв хамăрăн паттăр Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине пурне те, вăл шутра пахалăх тĕлĕшпе тăшман хĕçпăшалĕнчен малта тăракан чи лайăх хĕçпăшал та парса тăма пултарчĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсемпе инкек-синкексене тÿссе, совет çыннисем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕç, эпир хамăрăн тылри работниксене, уйрăмах вăя хĕрхенмесĕр ĕçленĕ совет хĕрарăмне тата Тăван çĕршыва пĕтĕм чун-чĕререн парăннă совет çамрăкĕсене тав тума тивĕçлĕ. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ). Çакна пула эпир йывăр вăрçă вăхăтĕнче хамăр халăхăн пурнăç шайне кирлĕ пек тытса тăма пултартăмăр.

Рабочи класăн миллионшар ывăлне мобилизациленĕччĕ, вĕсем фронтра çапăçатчĕç. Анчах заводсемпе фабрикăсем малалла ĕçлесе пычĕç, вĕсем çĕнĕ кадрсем, уйрăмах хĕрарăмсемпе çамрăксен йышĕнчен чылай хутшăнтарчĕç. Вăрçă вăхăтĕнче çĕнĕ заводсем, электростанцисем, шахтăсем, чугун çулсем тунă, вĕсене пуринчен ытларах Хĕвелтухăçĕнчи районсенче тунă. Социализмлă ăмăртăва, унăн ĕç тухăçлăхне ÿстермелли çĕнĕ формисене сарассишĕн малта пыракан рабочисем тата мĕнпур рабочи класс яланах тимлĕн тăрăшса пычĕç. Профессиллĕ союзсем тата рабочисен ытти организацийĕсем рабочисен массисене организацилес, вĕрентсе çитĕнтерес ĕçе çине тăрса туса пычĕç. Рабочисемпе работницăсем вăрçăччĕнхинчен нумай ытларах ĕçлесе пычĕç. Çавна пула эпир нумай йывăрлăхсене çĕнтертĕмĕр.

Вăрçă вăхăтĕнче колхоз хресченĕсем ялхуçалăхĕнче хăйсен политикăллă ăнланулăхне, колхозла йĕркелĕхне кăтартса пачĕç. Хресченсем халĕ ĕнтĕ колхозсенче социализмлă ăмăрту мĕнле вырăн йышăнса тăнине лайăх ăнланса илчĕç. Вĕсем, пирĕн çĕршыв территорийĕн пĕр пайне нимĕç оккупанчĕсем вăхăтлăха тытса илнипе ялхуçалăхне кÿнĕ çав тери пысăк сиене витес тесе, нумай ĕç тупрĕç. Çаксем пурте ĕнтĕ пире вăрçă вăхăтĕнче тырпулăн шанчăклă запасне тытса усрама тата промышленноçăн тивĕçлĕ предприятийĕсене ялхуçалăх чĕр-таварĕсем парса тăма май пачĕç. Уйрăмах, пирĕн Хĕрлĕ Çар ретĕнче пуринчен ытла колхозниксем тăнине шута илсен, çав задачăна пурнăçа кĕртме çăмăлах пулмарĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче фронтпа тыл задачисене эпир пирĕн совет интеллигенцийĕ те Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне пурнăçа кĕртсе пынине пула татса пама пултартăмăр. Интеллигенци Совет влаçĕ вăхăтĕнче мĕнле вăй пулса тăнине вăрçă уççăн кăтартса пачĕ. Халĕ ĕнтĕ кивĕ тата çĕнĕ интеллигенци пирки калаçусем илтĕнми пулчĕç. Ку ыйтăва пурнăç хăй татса пачĕ. Интеллигенцин ытларахăш пайĕ хуçалăх ĕçне организацилес тĕлĕшпе, специалистсен çĕнĕ кадрĕсене пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе, халăх сывлăхне сыхлас тата халăхăн культурăллă шайне ÿстерес тĕлĕшпе хăйĕн пысăк тивĕçне тÿсĕ кăмăллăн та ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырать. Совет интеллигенцийĕ хăйĕн халăхне тивĕçлĕ пулса тăрать тесе, Тăван çĕршывшăн шанчăклăн ĕçлет тесе эпир халĕ ĕнтĕ пысăк кăмăлпа калама пултаратпăр. (АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ вăрçă вăхăтĕнче малалла тĕрекленсе пычĕ. Пирĕн нумай нациллĕ государство, тĕрлĕ чĕлхеллĕ, тĕрлĕ йăлаллă, тĕрлĕ культурăллă тата тĕрлĕ историллĕ халăхсем пурăнакан государство татах та таччăнрах пĕтĕçрĕ, совет халăхĕсем пĕр-пĕринпе татах та ытларах тусланчĕç. Эпир вăрçă вăхăтĕнче тÿссе ирттернĕ тĕрĕслеве нумай нациллĕ урăх нимĕнле государство та тÿссе ирттереймен пулĕччĕ. Пирĕн государство кăна, этеме-этем пусмăрлассине пĕтернĕ государство, пĕр-пĕрне хирĕç тăракан классем çук государство, рабочисемпе хресченсем, интеллигенци, пĕртан правалла граждансем пулса тăрса, вырăнти ĕçсене те, çавăн пекех государствăна тытса пырассине те йĕркеленĕ государство, — дворянсемпе купецсен кивĕ Российи мар,—çакăн пек государство кăна 1941—1942 çулсенче нимĕçсем тапăнса килнĕ йывăр вăхăта тÿссе ирттерме, иртĕхсе кайнă тăшмана хамăр вăйсемпе çапса аркатма, тăшмана хамăр çĕр çинчен кăларса ывăтма пултарчĕ, кунсăр пуçне тата ытти халăхсене те ют çĕршыв пусмăрçисенчен ирĕке тухма хăватлă пулăшу пачĕ. Пирĕн çĕршывра халĕ ĕнтĕ пусмăрта пурăнакан е танмар правалла халăхсем çук. Нумаях та пулмасть, патша, тĕттĕмĕнче, çав халăхсем колони е çурмаколони пурнăçĕпе пурăннă. Совет государствинче пур халăхсене те никама пăхăнмасăр пурăнма тата наци тĕлĕшĕнчен ирĕклĕн аталанса пыма право панă, пур халăхсене те пĕр-пĕринпе туслă, пĕр-пĕрне хисеплесе пурăнма, çавăн пекех тата кашни халăх хăйĕн нациллĕ культурине аталантарас ĕçре тата Совет государствине пĕтĕмĕшпе малалла хăпартас ĕçре вăй хурса тава тивĕçлĕн ĕçленине хисеплесе пурăнма вĕрентсе пыраççĕ.

Пирĕн профсоюз, производство, культура, спорт организацийĕсен тата рабочисен ытти тĕрлĕ вĕçĕхĕррисĕр организацийĕсен активлăхĕнче, мĕнпур Совет Союзĕн анлă территорийĕ çинчи миллионшар совет хресченĕсене пĕтĕçтерсе тăракан колхозсене тунинче, фабрикăсемпе заводсенче, колхозсемпе совхозсенче, шахтăсенче, чугун çулсем çинче социализмлă ăмăрту тăтăшах малалла ÿссе пынинче,—çаксенче пуринче те чăн-чăн халăх демократизмĕ ÿссе чечекленни палăрса тăрать. Кун пеккине эсир ĕлĕкхи вăхăтра курман, кун пекки вăл пусмăрлакансемпе пусмăртисен класĕсене пайланса тăракан нимĕнле государствăра та пулма пултараймасть, çавăн пек пусмăрлакансемпе пусмăртисен класĕсене пайланса тăнине пирĕн çĕршывра Совет влаçĕ такçанах пĕтерсе хунă. Пирĕн çĕршывăн культурăллă пурнăçĕ хăвăрт ÿссе пынинче тата халĕ интеллигенци, халăхăн малта пыракан тата чи культурăллăрах пайĕ пулса тăрса, хăйĕн халăхĕпе пĕрлешнинче, çапла вара совет обществин моралльпе-политикăллă пĕрлĕхне татах та çÿллĕрех пусăма çĕкленинче,—çаксенче пуринче те ĕнтĕ пирĕн çĕршывăн пуласлăхĕ тĕлĕшпе пире çĕнĕ шанчăксем парса хавхалантаракан совет демократизмĕ çĕнĕ вăй-хăватпа çĕкленнине курмасăр тăма çук. Советсем мĕнпур халăхсене нациллĕ культурăна пĕрмаях малалла хăпартса пыма май панинче, нациллĕ талантсене вĕрентсе çитĕнтерессишĕн активлăн тăрăшма, пĕртан правалла совет халăхĕсем хушшинчи туслăха тата пĕр-пĕрне тăванла пулăшассине ÿстерсе пыма май панинче,—çаксенче пуринче те эпир совет демократийĕн пурне те çĕнтерекен вăйне, вăл мĕнпур халăхсене чăн-чăн прогрессиллĕ аталантарас ĕçре аслă вырăн йышăнса тăнине куратпăр. Çакă вăл кивĕ Российăра пулман тата çакă вăл монархи режимĕллĕ е республика режимĕллĕ ытти нимĕнле çĕршывра та çук-ха. Совет демократизмĕн мобилизацилекен вăйĕ тата паттăрла ĕçсем тума хавхалантаракан совет патриотизмĕ вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах палăрчĕç. Совет çыннисем телейлĕ, мĕншĕн тесен пирĕн çĕршыва иккĕмĕш вырăнта тăракан государствăсен ретне анса ларассинчен хăтарнă Октябрьти Революцие пула халăхсен вăйĕсем дворянсемпе буржуйсен, помещиксен тытнăмĕнчен ирĕке тухрĕç, совет влаçĕн никĕсĕ çинче вĕсем халиччен нихăçан пулман аталану майĕсене тупрĕç. Акă мĕншĕн ĕнтĕ фашистсене çĕнтернинче эпир, çавăнпа пĕрлех, совет демократийĕн аслă çĕнтерĕвне куратпăр.

Вăрçă вăхăтĕнче совет çыннисен хамăр çĕршывăн тулашнелле чылай аякка кайма тиврĕ. Фашизм вăйлăн хирĕç тăнă пирки пирĕн çарсен чылай ют çĕршыв государствисен çĕрĕсем çине кĕмелле пулчĕ, вĕсен ялĕсемпе хулисенчи пурнăçпа çывăхраххăн паллашмалла пулчĕ, хĕвеланăçĕнче Вена, Будапешт, Берлин пек столицăсене çитмелле пулчĕ. Çав государствăсенче пуринче те, вăл шутра ĕнер фашизм енче тăнă государствăсенче те, совет çыннисем ĕççынни класĕсемпе тата демократиллĕ ушкăнсемпе çăмăллăнах пĕр чĕлхе тупрĕç. Совет çыннисенчен, паллах, вĕсем фашизм тарçисен лагерĕнчи ĕнерхи тăшмансем çине тата фашистсен влаçĕ пулăшса тăнă обществăн çÿлти сийĕсем çине хăйсен тусĕсем çине пăхнă пек пăхассине кĕтме пулман. Паллах, ытти халăхсен йăлисемпе паллашни пирĕн çынсене хăйĕн уссине парĕ тата вĕсен тавракурăмне анлăлатĕ. Çакă питĕ кăмăллă: совет çыннисем хамăр Тăван çĕршыва, Совет влаçне татах та хĕрÿллĕнрех юратакан кăмăлпа киле таврăнаççĕ. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Совет влаçĕ халăха çывăх тăнипе вăйлă. Парламентла демократирен уйрăлса тăрса, совет демократийĕ чăннипех халăх демократийĕ пулса тăрать. Çĕнĕ йышши государство пулса тăракан Совет государствин задачисем кивĕ йышши государствăсен задачисем пек мар, пачах урăхла. Çапла, Совет государствин обязанноçĕсене—халăха пĕтĕм тĕнчери мире сыхлас тĕлĕшпе, халăхсем пĕр-пĕринпе туслă пурăнмалла тăвас тата пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес тĕлĕшпе политикăллă воспитани парас задачăсем кĕреççĕ; çакă вăл çĕнĕ агресси хатĕрлеме тата фашизма çĕнĕрен чĕртме кирек мĕнле хăтланнине те тăрă шыв çине кăларассине хирĕç пымасть, пачах та урăхла, çав ĕçе туса пыма кирлине пĕлтерет, çакна ăна вăрçă хыççăнхи вăхăтра та манма юрамасть. Рассăсемпе нацисем хушшинче тăшманла шухăшсем сарни, антисемитизма сарни тата ытти çавăн пеккисем Совет Конституцийĕ тăрăх преступлени тесе шутланаççĕ, çавăн пекех пирĕн пичетре çынна çын вĕлерессине, çаратассине тата пусмăрлассине мухтама чарнă. Çав йышши «чăрмавсем» совет демократийĕн условийĕсенче йĕркеллĕ япаласем пулса тăнă пекех, хăшпĕр государствăсенче, шел пулин те, пачах та урăхла япаласем йĕркеллĕ пулса тăраççĕ. Хăшпĕр çĕршывсенче сăмах тата пичет ирĕклĕхне халĕ те çапла ăнланаççĕ-ха: фашизмăн сутăнчăк тарçисем, агрессипе фашизм пропагандине чарусăррăн сарас тесе, нимĕнле маскă та тăхăнмаççĕ, анчах нумаях та пулмасть çеç-ха мĕнпур çут тĕнчери халăхсем тĕнчери агрессипе фашизма халиччен иртĕхсе кайма ирĕк панă пирки хăйсем нумай юн тăкрĕç тата асап курчĕç. Халăха политикăллă воспитани парас задачăна хăй çине илме кашни государствах вăй çитереймест: фашистла государствăсем çав ĕçе тытăнса пăхнинчен, халăхăн духовнăй пурнăçне, культурине тата прависене пусмăрланисĕр пуçне, урăх нимĕн те тухмарĕ. Совет демократийĕ малта тăнине Совет Союзĕ вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах уçăмлăн кăтартса пачĕ. Чăн-чăн халăх государстви пулса тăракан ССР Союзĕ, вăрçă вучĕ витĕр тухса, татах та ытларах çирĕпленчĕ. Пуриншĕн те паллă, пирĕн çĕршывра халăха политикăллă воспитани парас ĕçĕн уйрăм ответлăхĕ большевиксен партийĕ çинче тăрать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ совет халăхĕ большевиксен партийĕн çулпуçĕ çинчен калакан сăмаха—«Пирĕн учитель, пирĕн атте, пирĕн çулпуç Сталин юлташ» тесе пĕтĕм чун-чĕререн юратса калакан сăмаха çав тери пысăк шухăш хывать. (НУМАЙЧЧЕН ТĂВĂЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ. ПУРТЕ УРА ÇИНЕ ТĂРАÇÇĔ).

Эпир СССР Верховный Советне çĕнĕрен суйламалли вăхăт патнелле çывхарса пыратпăр. Çĕнĕ, пĕтĕмĕшлĕ суйлавсем Совет государстви Отечественнăй аслă вăрçăра тÿссе ирттернĕ мĕнпур тĕрĕслевсем хыççăн пулса иртеççĕ. Пирĕн халăх суйлав урнисем патне çак çулсенче туяннă политикăллă пысăк опытпа пуянланса пырать, хамăр çĕршывăн кунçулĕ çинчен, Европăри тата пĕтĕм тĕнчери ĕçсем çинчен нумай шухăшласа пăхнă хыççăн пырать. Большевиксен партийĕ партире тăман совет активĕн анлă ушкăнĕсемпе пĕрле суйлавсене хатĕрленет, çав суйлавсенче вăл совет демократийĕ чаплăн палăрнине тата хамăр халăха пĕтĕçтермелли, Совет государствине малалла тĕреклетмелли тепĕр хăватлă май пулса тăнине курса тăрать.

IV.

Мирлĕ строительствăна куçни тата пирĕн задачăсем

Пирĕн çĕршыв мирлĕ строительство тапхăрне куçрĕ. Пĕтĕм халăх умне çĕнĕ те аслă задачăсем тухса тăчĕç.

Эпир, паллах, СССР составне кĕнĕ çĕнĕ территорисем çине кирлĕ пек çаврăнса пăхăпăр. Паллă ĕнтĕ, вăрçăччен Совет Союзĕн составĕнче сахал вăхăт хушши пулнă Хĕвеланăç Украинăпа Хĕвеланăç Белоруссие улăштарса çĕнетесси çине тивĕçлипе çаврăнса пăхма пирĕн çĕршыва тăшман килсе тапăнни кансĕрлерĕ. Халĕ, Польшăпа тунă договор тăрăх, Совет Союзĕпе Польша хушшинче çĕнĕ чикĕ тунă. Çавна пула белоруссем пурăнакан мĕнпур территорие Советлă Белоруссипе татăклăнах пĕрлештернĕ. Вăл халĕ ирĕклĕ нациллĕ аталану çулĕпе малалла шанчăклăн пыма пултарать. Чехословакипе тунă договор тăрăх, Карпат леш енчи Украина та юлашкинчен пирĕн государствăн составне кĕни паллă. Халĕ ĕнтĕ Советлă Украина украинецсем пурăнакан мĕнпур территорие пĕрлештерсе тăрать, çавăн пек тăвасси çинчен пирĕн тăвансем — украинецсем ĕмĕрсем хушши ĕмĕтленнĕ. Румынипе тунă договор тăрăх, Советлă Молдави те молдавансем пурăнакан мĕнпур территорисене пĕтĕмпех пĕрлештерчĕ, çакă ĕнтĕ ăна малалла аталанса пыма анлă майсем туса пачĕ. Çавăн пекех тата Кенигсберг облаçне Совет Союзĕ çумне хушса пĕрлештерни пирĕн хĕвеланăçри чикке инçерех куçарчĕ, çакă ĕнтĕ пире Балтика тинĕсĕнче хĕлле те шăнман порта тытса тăма май пачĕ. Балтика тинĕсĕ тăрăхĕнче Советлă Литвана, Советлă Латвие, Советлă Эстоние çĕнĕрен туса хунă. Çакăн пек ĕнтĕ пирĕн хĕвеланăçĕнчи чикĕсем. Совет Союзне хăрушсăрлăхра тытса тăрас енчен илсе пăхсан, çакă вăл питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Çурçĕр-хĕвеланăçĕнче эпир хамăрпа Финлянди хушшинчи чикке Совет Союзĕпе Финлянди 1940 çулта тунă мирлĕ договор тăрăх тепĕр хут туса хутăмăр. Кунсăр пуçне, çурçĕрте Совет Союзне Печенга (Петсамо) районĕн территорине каялла тавăрса панă.

Юлашкинчен тата Инçетри Хĕвелтухăç çинчен. Кунта Совет Союзĕн аллине Сахалин утравĕн кăнтăр пайĕ тата Курильски утравсем куçрĕç. Вĕсем Совет Союзĕн хĕвелтухăçĕнчи хăрушсăрлăхĕшĕн питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Пирĕн государствăн Маньчжурири чугун çулсем тĕлĕшĕнчи прависене çĕнĕрен туса хунине, çавăн пекех тата Маньчжурин кăнтăр пайĕнче Порт-Артурпа Дальний районĕсем тĕлĕшпе хамăрăн правасене çĕнĕрен туса хунине астутарса хăвармалла.

Çак районсем çине, çавăн пекех тата Финлянди территорийĕнчи пирĕн Перккала-Удд ятлă тинĕс-çар базин районĕ çине те тивĕçлипе çаврăнса пăхмалла, вĕсем совет çĕршывĕн çĕнĕ территорийĕсем пулнине кура, пирĕн государствăн вĕсемшĕн уйрăмах хытă тăрăшмалла.

Тăшман çарĕсем вăхăтлăха оккупациленĕ совет территорийĕсем тĕлĕшпе вăраха яма юраман задачăсене пирĕн май килнĕ таран хăвăртрах татса памалла. Хăйсем хыççăн нимĕçсем çаратнă, ишĕлтернĕ хуласем, çаратса кайнă тата ишĕлтерсе пĕтернĕ пиншер ялсем хăварнă. Захватчиксене хăваласа кăларнă хыççăнах кунта пур çĕрте те хуçалăха юсаса ура çине тăратас ĕçе пуçласа янă. Анчах та халĕ ку ĕçĕн пĕчĕк пайне çеç тунă-ха. Çав районсенчи хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчи пурнăçа пĕтĕмпех юсаса хăвăртрах ура çине тăратас ĕçе пулăшас тесе, мĕнпур совет халăхĕн, пĕтĕм совет республикисен тăрăшса ĕçлемелле. Фабрикăсемпе заводсене юсаса ĕçе ярасси, колхозсене, машинно-тракторнăй станцисене тата совхозсене юсаса йĕркелесси, шкулсемпе больницăсене юсаса çĕнĕрен уçасси, çав вырăнсенче пурăнакан хулапа ялти кашни çынна çуртйĕр туса парас тата унăн çемьине вырнаçтарас тесе пурăнмалли çуртйĕрсене юсаса пĕтересси,—çаксем пурте вăраха яма юраман ĕçсем пулса тăраççĕ.

Вăрçăра пулнă, халĕ çартан киле таврăнакан çынсемшĕн тăрăшасси, çавăн пекех тата инвалидсемшĕн тăрăшасси, Хĕрлĕ Çар воинĕсен тăлăха тăрса юлнă çемьисемшĕн тăрăшасси советпа профсоюз, партипе комсомол организацийĕсен, çавăн пекех тата ялти колхозсемпе вĕсен организацийĕсен паха тивĕçĕ пулмалла тăвас пулать. Пирĕн çак ответлă задачăна татса парас тесе тата вăрçă кÿрсе хăварнă сурансене май килнĕ таран хăвăртрах тÿрлетес тесе, мĕн кирлине пурне те тумалла. Çавăн пек ĕнтĕ пирĕн вăраха яма юраман тепĕр задача.

Пирĕн халĕ темиçе çул хушшинчех çĕршыври хуçалăха вăрçăччĕнхи шайран чылай иртерсе ярас тата мĕнпур халăхăн пурнăç условийĕсене чылаях лайăхлатмалла тăвас тесе, пĕтĕм халăх хуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе тăракан тĕп задачăсене татса парас ĕçе тытăнмалла. Партипе правительство СССР халăх хуçалăхне 1946—1950 çулсенче юсаса ура çине тăратмалли тата аталантармалли, çавăн пекех тата чугунçул транспортне юсаса ура çине тăратмалли тата аталантармалли пилĕкçуллăх плана тăвасси çинчен нумаях та пулмасть пичетлесе кăларнă решенин пĕлтерĕшĕ çакăнта пулать те ĕнтĕ. Пирĕн халăх сталинла пилĕкçуллăхсен вăйне лайăх пĕлет, çав пилĕкçуллăхсем пирĕн государствăн вăй-хăватне ÿстерчĕç, пире çĕнтерÿ тума май пачĕç. Çĕршыв валли кирлĕ таранах металл, кăмрăк, нефть, паровоссем, вагонсем, тракторсем, ялхуçалăх машинисем, автомобильсем, тĕрлĕ карап-кимĕсем, электростанцисем тата ыттисене те тăвас тесе, пирĕн йывăр промышленноçа çĕнĕрен çĕклемелле. Ялтипе хулари халăх куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларассине, çавăн пекех тата ытларах апат-çимĕç продукчĕсем парассине кĕтет. Колхозсен нушисемпе ялхуçалăхĕн ыйтăвĕсене тивĕçтерме кирлили халь нихăçанхинчен те вăйлăрах палăрма пуçларĕ. Пирĕн культура тĕлĕшĕнчи требованисем ÿсрĕç, вĕсем чылай нумай енлĕрех пулса тăчĕç. Çĕршыв оборонин нушисене, Хĕрлĕ Çарăн нушисене тата Тинĕс-Çар Флочĕн нушисене чăннипех тивĕçтерес тĕлĕшпе те пирĕн хамăрăн çав тери пысăк тивĕçсене пĕр минутлăха та манма юрамасть. Пирĕн ĕçсĕрлĕх çук, пулмасть те. Пирĕн çĕршывра пурин те ĕç пур, мĕншĕн тесен пирĕн государство—ĕççыннисен государстви пулса тăрать. Пирĕн совет çыннин ĕç тухăçлăхне ÿстерес тата унăн ĕç пахалăхĕ лайăхрах пулмалла тăвас тесе, промышленноçра, ялхуçалăхĕнче, транспортра тата пирĕн пур учрежденисенче те ĕçе мĕнле тĕрĕс организацилесси çинчен ытларах шухăшламалла.

Пирĕн вăхăт—çÿлти пусăмра тăракан техникăн тата унпа наукăпа производствăра анлăн усă курнин вăхăчĕ. Халĕ ĕнтĕ атом энергийĕпе те тата техника тĕлĕшĕнчи ытти аслă открытисемпе те усă курма май тупнă. Çавăнпа та хуçалăх планĕсенче техника ыйтăвĕсене, пирĕн промышленноçăн техника тĕлĕшĕнчи ÿсĕмне хăпартса пырас тата пысăк квалификациллĕ техникăллă кадрсем хатĕрлес ыйтусене иккĕмĕш вырăна лартмалла. Промышленноçпа халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсенче те пирĕн хальхи вăхăтри тĕнчери техникăпа танлашса пымалла, совет наукипе техникине пур майсемпе те малалла аталантарса пымалли мĕнпур условисене туса памалла. Тăшман пирĕн мирлĕ те творчествăллă ĕçе кансĕрлесе чарчĕ. Анчах та эпир мĕн тума ĕлкĕрейменнине тивĕçлипе туса пĕтерсе хăваласа çитĕпĕр, хамăрăн çĕршыва чечеклентерсе пырăпăр. Пирĕн атом энергийĕ те тата ыттисем те нумайĕшĕсем пулĕç. (НУМАЙЧЧЕН ТĂВĂЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ. ПУРТЕ УРА ÇИНЕ ТĂРАÇÇĔ). Çав задачăсене татса пама хамăрăн ĕмĕр иксĕлми большевикла мĕнпур вăй-хăватăмăрпа, совет çыннисен мĕнпур хăватлă вăйĕпе тытăнар! Пире Сталин юлташ вĕрентсе пынă пек ĕçлеме тытăнар! (ТĂВĂЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Юлашкинчен, пирĕн тулашри политикăн задачисем çинчен. Совет Союзĕ пĕтĕмĕшле мир ĕçне усă тăвас тесе тата тĕнчери государствăсем хушшинчи ĕçлĕ çыхăнусене аталантарса пырас тесе, миршĕн тата ытти çĕршывсемпе килĕштерсе ĕçлессишĕн тăрăшассине яланах малти вырăна хунă. Халĕ эпир «государствăсен системинче» пурăнатпăр-ха, фашизм тымарĕсемпе империализмла агрессие çĕр çинчен пĕтĕмпех тăпăлтарса тасатман-ха, çавăнпа та пирĕн мире çĕнĕрен пăсма хăтланакансем тĕлĕшпе сыхăлăхлă пулмалла. Мире юратакан державăсене пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлеттерессишĕн тăрăшасси, ĕлĕкхи пекех, пирĕн паха тивĕç пулса тăрать.

* * *

Пирĕн ХАМĂРĂН ÇĔНТЕРĔВЕ ÇИРĔПЛЕТСЕ хăварассинчен пахарах задача урăх çук. Çав çĕнтерĕве эпир хаяр кĕрешÿсенче çĕнтерсе илтĕмĕр, вăл пирĕн çĕршыва çĕнĕрен аслă çитĕнÿсем тума тата пирĕн халăхăн пурнăç условийĕсене малалла лайăхлатса пыма çĕнĕ çул уçса пачĕ. Социализм строительствине çакăн пек анлăн сарса ямалли пуласлăх тата Совет Союзĕн вăйĕсене çакăн пек аталантармалли майсем пирĕн умра нихăçан та хальхи пек туллин тухса тăман. Пирĕн халăх хăйĕн аслă ĕçне, Октябрьти Социализмлă Аслă Революци ĕçне çирĕп шанса тăрать. (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Сывă пултăр совет халăхĕ—çĕнтерÿçĕ-халăх, унăн Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ! (НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Сывă пултăр та чечекленсе пытăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв, Социализмлă Революцин Тăван çĕршывĕ! (ТĂВĂЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Сывă пултăр Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви! (НУМАЙЧЧЕН ТĂВĂЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ).

Сывă пултăр Ленин—Сталин Партийĕ — пирĕн çĕнтерÿсене хавхалантаракан тата организацилекенĕ! (НУМАЙЧЧЕН ТĂВĂЛЛĂН АЛĂ ÇУПАÇÇĔ)

Сывă пултăр Совет халăхĕн çулпуçĕ Аслă Сталин! (ТĂВĂЛЛĂН, НУМАЙЧЧЕН АЛĂ ÇУПНИ ОВАЦИЕ КУÇАТЬ. ПУРТЕ УРА ÇИНЕ ТĂРАÇÇĔ. «АСЛĂ СТАЛИНА — УРРА!» ТЕНĔ САСĂСЕМ ИЛТĔНЕÇÇĔ).

Сывă пултăр ССР Союзĕнчи халăхсен тăванла союзĕ тата ĕмĕр арканми туслăхĕ!

ТЕЛЕЙ ЮРРИ

Октябрь пачĕ çĕр! Çав çĕр çинче
Ĕмĕрлĕхе, пур халăхсемшĕн
Хĕвеллĕ те ытарайми тĕнче
Ӳссе хăпарчĕ, чечекленчĕ.

Çуллен колхозник сухалать, акать.
Вĕрет вăраннă çĕр сĕткенĕ,
Çăра тырпул пулса вăл хумханать
Мĕнпур çĕр вăйĕпе çĕкленнĕн.

Утать колхозник пурнăç хирĕпе,
Вăл савăнать умри телейшĕн.
Тен, юн тăксах вăл ĕлĕк кӳршипе
Пĕр пусăм çĕршĕн тӳпелешнĕ...

Чура вăл пулнă, мĕскĕн çĕр чури.
Халь хăй хуçа, мăнаç та аслă.
Вăл юрлакан суха-ака юрри
Куççуллĕ мар паян, хаваслă.

Çĕрпе пĕрле чăн-чăн этем чысне
Ĕмĕрлĕхе ăна пилленĕ.
Стена çинчен йăвашшăн куç хĕссе
Пăхать тăван аттемĕр Ленин.

Октябрь пачĕ вăрмансем, шывсем!
Вăл пачĕ инкĕлми пуянлăх.
Паян мĕнпурĕ—халăхăн вĕсем,
Вĕсен хуçийĕ—аслă халăх.

Пăхсамăр, тăвансем, йĕри-тавра:
Ку чăн телей çĕршывĕ мар-и!
Куççуль пек юхнă Çавалран та ав
Ильич çути тапа пуçларĕ.

Ĕнтĕ ку пурте—санăн, пурте—ман,
Ку—халăхăн, çĕршывăн, пирĕн.
Тĕнче хальччен кун пеккине курман,
Ку—аслă коммунизм ирĕ.

Октябрь пачĕ мир! Çав мирпеле
Эпир пурнатпăр лăпкă, ырă.
Тăшман ăна, хурах пек, тискерле
Пăсма пăхсан, чыхланчĕ пырĕ.

Пĕр ĕмĕт пирĕн ӳсрĕ ӳснĕçем:
Чăн этемле кăна пурнасчĕ!
Этем валли ав пирĕн домнăсем
Телей хĕвелĕ шăратаççĕ.

Пăхатăп эпĕ Аталăм çине:
Унпа хăш Одер-ха танлаштăр!
Яланлăх тупрĕ хăйĕн тивĕçне
Хура пӳртрен тухнă чăваш та.

Пăхатăп эп Тăван çĕршывăма:
Ăна мĕнле çĕршыв-ха çиттĕр!
Телей сунатпăр аслă çул хызма
Ăна пин ĕмĕр витĕр.

Çĕршывăм коммунизма утать,
Хăюллăн, паттăррăн, вăй-халлăн.
Трибун çинчен ăна çул кăтартать
Çĕнтерӳсен çулпуçĕ Сталин!

Аркадий ЭСХЕЛЬ.



Ӳкерчĕк çинче (сулахайран): пирĕн халăхăн тава тивĕçлĕ ывăл-хĕрĕсем—Совет Союзĕн Геройĕ **М. Карпеев**, биологи наукисен докторĕ **А. П. Петров** профессор, **В. Г. Зайцев** профессор, Красноармейски районри «Красны й Борденер» колхозри кок-сагыз лартса ӳстерекен бригадăн бригадирĕ **Р. П. Петрова**, çав районри «Ча мыш» колхозри кролик пăхакан **М. П. Мариенова**.

МАНА ЗАВОД ПУРНĂÇ ÇУЛĔ ÇИНЕ ТĂРАТРĔ

Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах эпĕ Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра ĕçлетĕп. Вăрçă çулĕсенче пĕтĕм Совет халăхĕ çĕнтерӳ кунне çывхартас тесе мĕнпур вăя хурса ĕçленĕ вăхăтра эпĕ те кунĕн-çĕрĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕм. Хамăн нормăна кулленех 180 — 200 процента яхăн тултарса пытăм.

Ĕçлеме кĕнĕ малтанхи кунсенчен пуçласах заводри ĕç мана питĕ кăмăла кайрĕ. Эпĕ кĕске вăхăт хушшинчех хамăн ĕçе хăнăхса çитрĕм. Станок çинче тимĕрсем шăтарма тата касса якатма вĕрентĕм. Кайрантарахпа вара татах та йывăр ĕçсене тума хăнăхрăм. Ĕçе лайăх пĕлсе çитни манăн ĕçри пултарулăха татах та ӳстерчĕ. Эпĕ хамăн паха опыта тăтăшах çамрăк рабочисене парса, вĕсене хам пек ĕçлеме вĕрентсе пытăм. Халĕ те ку ĕçе тимлĕн туса пыратăп.

Паян, пĕтĕм Совет халăхĕ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа 28 çул тултарнине савăнăçлăн уявласа ирттернĕ кун, манăн та хамăн савăнăçа пĕлтерес килет. Эпĕ Совет çĕршывĕнчи телейлĕ çынсенчен пĕри. Мана завод ĕçе вĕрентрĕ, вăл мана слесарь специальноçне парса, телейлĕ пурнăç çулĕ çине тăратрĕ. Çавăнпа та Тăван çĕршывăн вăйхăватне ӳстерсе пырассишĕн манăн вĕçĕхĕррисĕр вăя хурса ĕçлес килет.

А. СТОЛЯРОВА,
Заводри слесарь-стахановка.

Хутар шкулĕ 75 çул тултарать

Патша саманинче Кăрмăш уездĕнчи Хутар ялĕ, ытти чăваш ялĕсем пекех, тĕттĕм ял пулнă. Ялти 132 килтен 130 килĕ хура пӳрт, иккĕшĕ çеç шурă пӳрт пулнă. Ĕçхалăхĕ помещиксемпе капиталистсен тата кулаксен пусмăрĕ айĕнче тертленсе пурăннă.

Çав тĕттĕм чăваш ялĕнче, 1870 çулхи декабрĕн 19-мĕшĕнче (кивĕ стильпе декабрĕн 6-мĕшĕнче), В. И. Ленин ашшĕ Илья Николаевич Ульянов тăрăшнипе, ачасене вĕрентме пирвайхи шкула уçнă. Илья Николаевич вăл вăхăтра Чĕмпĕр (халĕ Ульяновск) кĕпĕрнинче халăх шкулĕсен инспекторĕ пулса ĕçленĕ. Инспектор пулса ĕçлепĕ вăхăтра Илья Николаевич Ульянов халăх хушшинче, вăл шутра Чĕмпĕр кĕпĕрнинче пурăнакан вак халăхсем хушшинче те, шкулсем уçса, халăха çутта кăларас тĕлĕшпе çав тери пысăк ĕçсем тунă, шкулсенчи вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатассишĕн мĕнпур вăя хурса ĕçленĕ.

Паллах ĕнтĕ, вăл вăхăтра патша чиновникĕсем, помещиксемпе капиталистсем, пупсемпе кулаксем культура ĕçне пур майсемпе те чăрмантарса тăнă. Анчах Илья Николаевич йывăрлăхсем умĕнче чарăнса тăман, вăл тĕл пулакан чăрмавсене сирсе пырса, хăйĕн пысăк та пархатарлă ĕçне туса пынă.

Илья Николаевич Хутар ялĕнче шкул уçнă вăхăтра унта шкул вырнаçтармалли çурт тавраш пулман. Çавăнпа та вăхăтлăха ачасене Хритушка ятлă çыннăн пӳртĕнче вĕрентмелле пулнă. Ун чухне шкула мĕнпурĕ те 12 ача çеç çӳренĕ.

Шкул уçнă хыççăнах И. Н. Ульянов ун валли ятарласа çурт тума йывăç кăларас ыйтупа Улхаш лесничествине кайнă. Çак ĕçе тусан вăл каллех Хутара таврăннă, халăха пухса шкул çуртне тума пуçласси çинчен каласа панă. Вара 1872 çулта вăл шкул çуртне туса пĕтернĕ. Ун чухне Илья Николаевич каллех Хутара пынă. Вăл ачасене еплерентнине тĕрĕсленĕ, тивĕçлĕ кăтартусем панă, шкул валли парнесем парса хăварнă.

Хутар шкулне уçнăран вара малтанхи 30—35 çул хушшинче вăл пуçламĕш шкул шутĕнче тăнă. Каярахпа, 1905—08 çулсенче, унта двухкласснăй училище туса хунă.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци хыççăн Хутар шкулĕ вăйлăн аталанса пыма пуçлать. Малтанах унта аслă пуçламĕш училище туса хураççĕ, унтан колхоз çамрăкĕсен шкулĕ туса хураççĕ, унтан—6 çул вĕренмелли шкул, каярахпа колхоз çамрăкĕсен шкулĕ туса хураççĕ, 1934 çултанпа Хутарта вăтам шкул уçăлать. 1936 çултан пуçласа Хутар шкулĕ 10-мĕш класран вунă хутчен вĕрентсе кăларчĕ, вăл шкултан çав вăхăт хушшинче 300 çын ытла вĕренсе тухрĕç. Вĕсенчен чылайĕшĕ аслă шкулсенчен вĕренсе тухрĕç, халĕ ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ.

Çапла вара, 75 çул каярах Илья Николаевич Ульянов тăрăшнипе уçнă шкул халĕхи вăхăт тĕлне пысăк шкул пулса тăчĕ, çамрăксене коммунистла воспитани парас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕ. Чăваш халăхне çутта кăларакан И. Н. Ульянов тăрăшса ĕçлени сая каймарĕ, вăл акнă ырă вăрлăх патвартăн ӳссе çитĕнчĕ.

Партипе правительство, аслă Сталин культура ĕçне аталантарассишĕн пĕр чăрăнмасăр ĕçлени Хутар шкулĕ ӳссе пынинчен те уççăн курăнса тăрать. 1936 çулта совет влаçĕ Хутарти вăтам шкул валли икĕ хутлă çĕнĕ пысăк çурт лартса пачĕ. Çĕнĕ çурт лартса пани шкул ĕçне лайăхлатма пулăшрĕ.

Отечественнăй вăрçă çулĕсенче Хутар шкулĕ фронта, Хĕрлĕ Çара пулăшас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕ. Вăтам шкулта вĕренекенсенчен чылайĕшĕ фронта кайса командирсемпе боецсем пулса тăчĕç, Тăван çĕршыва хӳтĕлес ĕçе активлăн хутшăнчĕç. Шкул ачисем колхозсене уйри тырпула пухса кĕртме нумай пулăшрĕç, фронтовиксем патне парнесем ярса тăчĕç.

Октябрьти Социализмлă Революци 28 çул тултарнипе пĕр вăхăталла Хутар шкулĕ 75 çул тултарать. Çак вăхăт хушшинчи ĕç опычĕпе усă курса, эпир хамăр ĕçе малашне те чыслăн туса пыма, вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлеме пулатпăр.

А. ПЕТРОВ,
Хутарти вăтам шкул директорĕ.

СОВЕТ ВЛАÇНЕ ТАВ ТĂВАТĂП

Сталинла Конституци панă тивлетпе эпĕ халĕ аслă шкулта—педагогика институтĕнче вĕренетĕп, совет учителĕ пулма ĕмĕтленетĕп.

1941 çулта, Первомайскинчи вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн, манăн малалла вĕренме каяс кăмăл питĕ пысăкчĕ. Анчах фашистла нимĕç захватчикĕсем вăр-хурахла килсе тапăннине пула, малалла вĕренме пулмарĕ. Партипе правительство чĕннипе, эпĕ Хĕрлĕ Çар ретне тăтăм, алла хĕçпăшал тытса тăшмана хирĕç кĕрешрĕм. 1941—42-мĕш çулсенче Севастополь хулине паттăррăн хӳтĕленĕ çĕрте, Брянск, Гомель çывăхĕнчи çапăçусенче пултăм. Жлобин хули патĕнче мана амантрĕç, эпĕ чăлах пулса юлтăм. Правительство мана «За отвагу» медальпе наградăларĕ.

Халĕ иккĕмĕш çул ĕнтĕ Педагогика институтĕнче тăрăшса вĕренетĕп. Тăван çĕршыва усăллă çын пулас тесе, мĕнпур вăя хурса вĕренме тăрăшатăп, институтра отличник шутĕнче тăратăп. Малтанхи вăхăтра мана вĕренме йывăртарах пулнă пулсан, преподавательсемпе юлташсем пулăшнипе эпĕ малта пыракан студентсен хисеппе тăрса, «отлично» паллăсемпе вĕренме пуçларăм.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци хыççăн тин (1921 çулта) çуралнă пирки эпĕ патша саманинчи тискер пурнăçа курман. Çав йывăр пурнăç çинчен эпĕ кĕнекесем тăрăх тата ватăрах çынсем каланипе анчах пĕлетĕп. 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче эпĕ хам ĕмĕрте пирвайхи хут СССР Верховный Советне депутатсем суйлас ĕçе хутшăнатăп. Суйлав урпи патне эпĕ çав тери савăнса кайма хатĕрленетĕп, аслă Сталин панă хамăн тивĕçпе усă курса, халăха тивĕçлĕ кандидатсемшĕн сасăлама пулатăп.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă кун ман Совет влаçне, аслă Сталин юлташа пĕтĕм чун-чĕререн тав тăвас килет.

М. МИХЕТОВ,
Пединститутри математика факультетĕнчи 2-мĕш курсра вĕренекен отличник.

ЧАП

Тĕнче шăпланчĕ, иртрĕ юн шăрши,
Тăхлан та, тар та халĕ сивĕ.
Мухтав сана, çĕршывăмçăм, çĕршыв,
Хăюлăхпа телей çĕршывĕ!

Такан кĕлеллĕ аттăн тусанне
Чӳхерĕ Эльба, çурĕ Висла.
Дунай çинче те хамăр сăнсене
Курса тăрса эпир шыв ăснă.

Шинеллĕ ачусем ăçта кăна
Пулмарĕç-ши, тăван çĕршывăм?
Курман-и хĕрлĕ çăлтăрлă çынна
Сар чул çыранлă Одер шывĕ?

Сĕвем çӳçне çамки çине хурсах
Пире юнарĕ вĕçкĕн Гитлер,
Анчах хĕçпе хăмсарнă вăр-хурах
Юлать-и мăшкăллă вилмесĕр...

Ансат, сасартăк ултă эрнере,
Пуçа йăтма та май памасăр,
Çапса салатăп тенĕччĕ пире
Каппайчăк та панккав ефрейтор.

Уяр июнĕн кăн-кăвак ирне
Вăратнă кĕрлеве кам манĕ—
Тăри юриллĕ ешĕл хирсене
Çăтас пек тапăнчĕ Германи.

Чĕтрерĕ çĕр те сывлăш çавă кун,
Хăпарчĕ вут та сикрĕ çулăм,
Шыва та юн, çĕре те юхрĕ юн,
Тумларĕ халăхăн куççулĕ.

Тăшман аваймĕ пирĕн çурăма,
Арканĕ хăй, çунса кĕлленĕ,—
Пире хастарлă, ирĕк пурăнма
Телей çулне кăтартнă Ленин.

Тăван çĕршывшăн сарлака хире
Хăюллăн ертрĕ савнă Сталин.
Вăл пачĕ шанчăк, пачĕ вăл пире
Пĕтми хăвăт та чăн ăсталăх.

Ӳлерĕ иртĕнсе вĕри тăхлан,
Татти-сыпписĕр çурĕ хурçă,
Масар̆сем вăрман пек пулнăран
Сайралчĕ нимĕç, нимĕç урчĕ

Мускавăн урамне кĕресшĕнччĕ,
Анчах та тухрĕ тепĕр майăн:
Эпир сӳретпĕр Одер хĕрринче
Тĕрлĕ чĕлхеллĕ те нумайăн.

Çыранĕ çӳллĕ, шывĕ тап-таса,
Салтак таптанă çулĕ такăр
Лашасене, килти пек шăхăрса
Юрланă майăн, шăваратпăр.

Унта тăван чĕлхемĕн сассине
Хутран-ситрен илтетĕп эпĕ:
Совет çĕршывĕн аслă мухтавне
Кĕрсе юлать чăвашăн чапĕ.

УХСАЙ ЯККĂВĔ.

ПРЕДПРИЯТИСЕМПЕ АРТЕЛЬСЕНЧЕ

УЛАТĂР. Паровозсем юсакан заводри тимĕрçĕ цехĕ октябрь уйăхĕнчи плана 115 процент тултарса, чугун çул транспорчĕ валли запаслă чăссем нумай туса кăларнă.

Çавăн пекех заводри литейнăй тата токарно-механически цехсен коллективĕсем те, уяв умĕн стахановла вахтăна тăрса, октябрь уйăхĕнчи плана срокчен тултарчĕç.

ЕТĔРНЕ. (Телефонпа). Спирт завочĕ ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 10 уйăхри плана 120 процент тултарнă. Заводри бригадăсем хушшинче 1-мĕш вырăна Галкин юлташ ертсе пыракан бригада тухрĕ.

Çу завочĕ те уяв умĕнхи ăмăртура пысăк çĕкленӳпе ĕçлерĕ. Завод ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çулталăкри плана 90 процент тултарчĕ.

Районри промкомбинат октябрь уйăхĕнчи плана 115 процент тултарчĕ.

ÇĔРПӲ. (Телефонпа). Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа 28 çул тултарнă ятпа пир-авăр фабрикинчи стахановецсемпе стахановкăсене премисем пачĕç. Çамрăк работницăсем Гаврилова Платонова кĕске вăхăт хушшинчех пир-авăр тĕртес ĕçе вĕренсе çитнĕ, хăйсен ĕçне тӳрĕ кăмăлпа туса пыраççĕ. Л. Беспалова, С. Константинова тата Минова ткачихăсем хăйсен нормине кулленех 135—140 процента яхăн тултарса ĕçлеççĕ. Вĕсене хаклă премисем панă.

ШУПАШКАР. «Кожупряжь» артель коллективĕ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа 28 çул тултарнă тĕле çĕнĕ продукцисем кăларма тытăннă.

Тир-сăран тăвакан цех тăлăпсемпе воротниксем çĕлемелли тир тума тытăннă.

Урана тăхăнмалли япаласем юсакан цех ата-пушмак юсас тата алшишсем çĕлес тĕлĕшпе кăна ĕçленĕ пулсан, халĕ кунта гимнастеркăпа шароварсем çĕлес ĕçе организациленĕ.

КАНАШ. (Телефонпа). Хулари «Швейник» артел коллективĕ Октябрь уявĕ ячĕпе илнĕ хăйĕн обязательствисене чыслăн пурнăçларĕ. Артель 10 уйăх программине 104,2 процент тултарнă. Ăмăртура çĕвĕ çĕлекен цех малта пырать, вăл октябрь уйăхĕнчи плана 108 процент тултарчĕ.

Артель хĕле пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ.

КУСЛАВККА. Пĕр уйăх каярах Çатрасри Максим Горький ячĕпе тăракан промартельре колхозниксем валли йĕкесем, шкул ачисем валли пеналсем, ручкăсемпе сумкăсем тата кантурта кирлĕ пулакан счетсем туса кăларма тытăннă.

ШУПАШКАР ПРИСТАНĔ ОКТЯБРЬ УЯВĔ УМĔН ИЛНĔ СОЦИАЛИЗМЛĂ ОБЯЗАТЕЛЬСТВĂНА ТУЛТАРНĂ

Шупашкар пристанĕн коллективĕ Октябрь уявĕ умĕн илнĕ хăйĕн социализмлă обязательствисене: тоннăпа шутласан—117,5 процент, тонно-километрпа шутласан—227 процент тултарчĕ. Октябрьпе ноябрь уйăхĕсенчи плана тоннăпа шутласан—216 процент, тонно-километрпа шутласан—394 процент тултарчĕ.

Пристань коллективĕ партипе правительствăн заданийĕсене малашне те чыслăн тултарса пыма сăмах парать.

Советлă Чăваш республики Аслă Октябрь 28 çул тултарнă тĕле

А. М. МАТВЕЕВ,
Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнине совет халăхĕ мирлĕ лару-тăру тапхăрĕнче кĕтсе илчĕ. Çак мирлĕ лару-тăрăва пирĕн халăх нимĕçсен фашистла захватчикĕсемпе Япони империалисчĕсене хирĕç хаяррăн кĕрешсе çĕнтерсе илнĕ. Кăçалхи Октябрь уявне эпир пирĕн çĕршыв политика тĕлĕшĕнчен питĕ пысăк ĕç тума—СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра уявлатпăр. Октябрьти революци 28 çул тултарнине совет халăхĕ большевиксен партине çав тери юратса хисепленипе тата ăна шанса тăнипе уявлать. Большевиксен партийĕ ертсе пынипе пирĕн халăх çĕнтерӳн мухтавлă çулĕпе утса тухрĕ. Пирĕн халăх паян хамăрăн çулпуçăмăрпа учителĕмĕре Сталин юлташа пĕтĕм чун-чĕререн парăннине кăтартса парать. Вăл ертсе пынипе совет халăхĕ социализмлă çĕршывăн телейĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлерĕ.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци çĕнтернине пула, хамăрăн Тăван çĕршыври ытти халăхсемпе туслăн килĕштерсе ĕçленипе, аслă вырăс халăхĕ пулăшса тата ертсе пынипе чăваш халăхĕ хуçалăхпа культура строительствинче пысăк çитĕнӳсем турĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем пирĕн Тăван çĕршывăн никама пăхăнманлăхне килсе тапăнсан, Аслă Октябрь çĕнтерĕвĕсене хӳтĕлеме пĕтĕм чăваш халăхĕ Совет Союзĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле çĕкленсе тухрĕ. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ пирĕн республика 25 çул тултарнă ятпа янă саламра чăваш халăхĕ çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшса ĕçленине çапла хакларĕç: «Совет халăхĕн фашистла захватчиксене хирĕç пынă Отечественнăй аслă вăрçи вăхăтĕнче чăваш халăхĕ Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртрĕ. Чăваш республикин ывăлĕсем тăшмана хирĕç хăюллăн та паттăррăн çапăçрĕç; вĕсенчен нумай пин çынна Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Чăваш республикинчи рабочисем, хресченсем тата интеллигенци хăйсен ĕçĕпе совет халăхĕ гитлерла Германие çĕнтерес ĕçе чылай пулăшрĕç». Партипе правительство çавăн пек пысăк хак панине пирĕн республикăн историйĕ çине ылттăн саспаллисемпе çырса хунă.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнине Чăваш республикинчи ĕçсыннисем ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕç. Пирĕн республикăри нумай коллективсем Октябрь уявĕ умĕн илнĕ хăйсен обязательствисене чыслăн пурнăçа кĕртрĕç. Пирĕн республикăри чи пысăк предприятисенчен пĕри—Канашри вагонсем юсакан завод хăйĕн программине уйăхран уйăха тултарса пырать, НКПС-ăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать.

Чăваш республикинчи малта пыракан нумай колхозсем Аслă Октябрь 28 çул тултарнине ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те туса пĕтернипе тата государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парса татнипе кĕтсе илчĕç. Çавăн пекех çав колхозсем планран ирттерсе государствăна тырă, çĕрулмипе пахчаçимĕç парас ĕçе вăйлатрĕç.

Акă, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене агротехника кăтартса панă пек туса пынине пула тата колхозниксен ĕçне тĕрĕс организациленине пула çулран çул вăйлă тырпул туса илет. Вăрçă вăхăтĕнче çак колхоз государствăна икĕ батальона тăвата çул хушши тăрантарса усрамаллăх тырă панă. 1945 çулшăн государствăна тырă памалли плана вăл сентябрь уйăхĕнчех 109,3 процент тултарнă. Кольцовка колхозникĕсем кăçал планран ирттерсе государствăна 2.400 пăт тырă панă.

Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз Октябрь уявĕ умĕн илнĕ хăйĕн обязательствине ăнăçлăн пурнăçларĕ: государствăна тырă парса татрĕ, планран ирттерсе 1.800 пăт тырă пачĕ.

Государствăна тырă памалли плана Вăрнар районĕ октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне, Етĕрне районĕ ноябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарчĕç.

Кăçал Чăваш республикинчи животноводсем те лайăх ĕçлерĕç. Пирĕн республика 1945 çулта обществăллă выльăхчĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне срокченех тултарнă.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа янă саламра Чăваш республикинчи ĕçсыннисем пирĕн советлă тăван çĕршывăн вăй-хăватне çирĕплетес тесе малашне те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлессине шанса каларĕç. Партипе правительство пире çакăн пек шанса тăни государство заданийĕсене тултарса пырас тĕлĕшпе татах та ытларах вăй хурса ĕçлеме хушать.

Республикăри промышленность предприятийĕсен производствăна мирлĕ вăхăтри пек ĕçлесси çине куçарассине хăвăртлатмалла. Пирĕн халăх хуçалăхĕн энергетика базине тĕпренех çирĕплетмелле, производствăри культурăна ӳстермелле, шалти мĕнпур ресурссемпе усă курмалла.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XXIV-мĕш пленумĕ ноябрĕн 25-мĕшĕнчен кая юлмасăр кашни колхоз, совхоз, подсобнăй хуçалăх тата уйрăм хресчен хуçалăхĕ тăрăх государствăна тырă парса татасси çинчен йышăннă решение пурнăçа кĕртсе пымалла. Обязательнăй йĕркепе государствăна тырă памалли плана тултарас ĕçе хăвăртлатнипе пĕрлех, колхозсем планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă пама илнĕ обязательствăсене тултарассине те хăвăртлатмалла. Государствăна çĕрулмипе пахчаçимĕç памалли плана кашни колхоз тăрăх ноябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр тултармалла. Государство умĕнчи чи малтанхи тивĕçе пурнăçлама—государствăна обязательство тăрăх тырă парса татас тĕлĕшпе кая юлса пынине пĕтерме районри мĕнпур партипе совет активне, кашни колхозникпе колхозницăна мобилизацилемелле.

Эпир пирĕн çĕршыври совет стройĕчи малта пыракан обществăллă строй пуçланнин 29-мĕш çулне пырса кĕретпĕр. Çак çул пирĕн хамăрăн совет державин вăрçăпа экономикăри вăй-хăватне татах та вăйлăрах ӳстермелле. Пирĕн халĕ, вăрçă вăхăтĕнчипе танлаштарсан, тухăçлăрах ĕçлеме пур условисем те пур, çав условисемпе усă курма çеç пĕлмелле.

Халĕ пирĕн аслă Тăван çĕршывăн халăх хуçалăхне аталантармалли çĕнĕ пилĕкçуллăх планне тăваççĕ. Çав план проектĕнче Чăваш республикинчи хуçалăхпа культура строительствине нумай укçа-тенкĕ пама палăртнă. СССР наркомачĕсене пăхăнса тăракан пирĕн республикăри предприятисене 260 миллион тенке яхăн, республикăри тата вырăнти промышленноçа 120 миллион тенкĕ хывма палăртнă. Сталинла тăваттăмĕш пилĕкçуллăхра пирĕн уйхирсенче тырпул тухăçлăхне татах ӳстерме, хуласемпе поселоксенче коммунальнăй çуртйĕрсен хисепне ӳстерме, культурăна, искусствăна тата халăх сывлăхне сыхлас ĕçе малалла аталантарма палăртнă.

Чăваш республикинчи рабочисем, колхозниксем, интеллигенци халăх хуçалăхне аталантармалли пилĕкçуллăх плана чыслăн тултарас тесе, хăйсен мĕнпур пĕлĕвĕпе пултарулăхне хывĕç.

СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленни ĕçсыннисене хуçалăхпа культура строительствин пур пайĕсенче те çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать.

Орденлă Чăваш республикинчи ĕçсыннисем, пирĕн Тăван çĕршыври ытти халăхсем пекех, Тăван çĕршывшăн чунчĕререн парăнса ĕçлес тĕлĕшпе аслă вырăс халăхĕнчен—пирĕн государствăна ертсе пыракан вăй пулса тăракан халăхран вĕренсе пырĕç. Пулăшу панăшăн тата ертсе пынăшăн чăваш халăхĕ вырăс халăхне çав тери тав тăвать. Аслă вырăс халăхĕнчен, ертсе пыракан халăхран пример илсе, Чăваш республикинчи ĕçсыннисем хамăрăн совет державин хăватлăхне малалла çирĕплетес тĕлĕшпе пирĕн умма парти, правительство тата аслă Сталин кăларса тăратнă задачăсене татса парассишĕн татах та вăйлăрах кĕрешĕç.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-СЕНЧЕ

Вăрнар МТС-ĕ кăçал Горький облаçĕнчи Каменски МТС-па ăмăртса ĕçлерĕ. Çак ăмăртура эпир хамăр çине конкретнăй обязательство илнĕччĕ. Пирĕн МТС коллективĕ хăйĕн обязательствине пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕ. Çураки планне эпир 184,6 процент тултарса, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн тата СССР Çĕрĕç Халăх Комиссарначĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене илме тивĕçлĕ пултăмăр.

Паян, Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă кун, эпир хамăр обязательствăна чыслăн пурнăçлани çинчен пĕлтеретпĕр. МТС тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана 170 процент тултарчĕ. МТС-ра 18 бригада, вĕсем пурте хăйсен заданийĕсене ирттерсе тултарнă. Кашни «СТЗ» трактор пуçне 675 гектар, кашни «Т2—Г» трактор пуçне 676-шар гектар сухаланă. Горючи 7,9 процент перекетленĕ, трактор ĕçĕсен хăйне ларакан хакне планпа пăхнинчен нумай ытларах чакарнă. Натуроплата планне октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлнех тултарнă.

Халĕ МТС коллективĕ тракторсем юсама тытăнчĕ. Çĕнĕ трактористсем хатĕрлес тĕлĕшпе курс уçрăмăр, унта 85 çын вĕренет.

Ф. НИКОНОВ,
МТС директорĕ.

* * *

Куславкка МТС-ĕ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнине пысăк çитĕнӳпе кĕтсе илчĕ. Тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана 142 процент тултарнă. МТС-ри 12 бригадăран кашниех хăйсен планне ытлашшипех пурнăçланă. Уйрăмăнах комсомолецсемпе çамрăксен бригади (бригадирĕ А. Скворцов) лайăх ĕçлерĕ. Вăл хăйĕн планне 205 процент тултарса, ытти бригадăсенчен мала тухрĕ.

Халĕ тракторсем юсас ĕç пырать. Октябрь уйăхĕнче юсамалли плана 150 процент тултарнă. 4 трактор, 4 сеялка, 6 культиватор, 5 плуг юсаса лартнă.

Ф. ПРИКОВ,
МТС-ăн старши агрономĕ.

* * *

Чкаловски МТС тракторсемпе ĕçлемелли çулталăкри плана 118,6 процент тултарчĕ. МТС-ри 12 бригадăран 6 бригади çулталăкри плана икĕ хут ирттерсе пурнăçларĕç. МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тыррине колхозсем пĕтĕмпех парса татнă.

Халĕ тракторсем юсас ĕç пырать: 12 трактор юсарăмăр ĕнтĕ. Унсăр пуçне 12 сеялка, 16 культиватор, 32 плуг юсаса пĕтернĕ. Декабрь уйăхĕнче тракторсем юсамалли çулталăкри плана вĕçлессишĕн кĕрешетпĕр.

Ф. АРХИПОВ,
МТС директорĕ.

Тăшман çĕрĕнче

Пĕр чарăнмасăр малалла куçса пынă хыççăн, пирĕн йывăр танксен ротине пĕр нимĕç ялĕнче оборона йышăнчĕ. Ку ĕç Германире эпир Одер шывĕ патне çитиччен пулса иртрĕ. Нимĕç ялĕнче çынсем курăнмаççĕ. Сайра хутран анчах пĕр-пĕр нимĕç пĕр çĕртен тепĕр çĕре куçса каянине е хăйĕн çемьинчен кама та пулин шырама тухнине курма пулать.

Яла кĕнĕ-кĕменех пирĕн автоматчиксем пысăк çуртсен подвалĕсемпе чердакĕсене хăвăрт пăхса тухрĕç, танксене куранмалла мар туса хучĕç. Ялти çуртсене пăхса тухнă хыççăн, Морозов автоматчик чи юлашкинчен таврăнчĕ.

Морозов çинчен çакна каласа хăварас пулать: вăл Шăхасан районĕнче çуралса ӳснĕ, пирĕн патăрта вăл автоматчик пулса çапăçатчĕ. Вăл хăюллă та паттăр воинччĕ, чун-чĕрипе Ленин—Сталин партийĕн ĕçне парăннă хастарлă комсомолецчĕ, Берлин сывăхĕнчи хаяр çапăçура ăна пите йывăр амантрĕç. Вилес умĕн вăл мана хăй çинчен хаçата тата Шăхасан районне, пĕр пĕччен юлнă амăшĕ патне çыру çырса яма ыйтнăччĕ, анчах хĕрӳ çапăçура эпĕ унăн адресне çухатрăм...

Çапла хастарлă комсомолец Морозов автоматчик эпир ларакан пӳлĕме пырса кĕчĕ те, хăйĕн усă сассипе рапорт пачĕ:

— Гварди лейтенанчĕ юлташ! Юнашарти икĕ хутлă çуртри пĕр пӳлĕмре ларакан пукансем çинче çăлтăр паллисем пур, пĕр пуканĕ çинче сирĕн хушаматара çырса хунă.

Пӳлĕмри боецсем тĕлĕнсе пĕр-пĕрин çине пăхса илчĕç.

Морозов автоматчик коллективра шӳт тума юрататчĕ, вăл питех те савăнăçлă çыннччĕ, анчах командир умĕнче, ĕç вăхăтĕнче вăл шӳт тунине никам та курман.

— Гварди рядовойĕ Морозов! Хушамата пурпа çырнă-и?—ыйтрăм эпĕ унтан.

— Çук,—ответлерĕ Морозов,—пурпа мар. Пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр айне касса «Степеркин» тесе çырнă.

«Германире тем те курма пулĕ-ха кунта», шутларăм эпĕ. Çавăнтах вара хампа пĕрле пĕр автоматчик илтĕм те, Морозов калакан икĕ хутлă çурта кайрăм.

Чăнахах та, Морозов каланă пекех, пĕр пуканăн пилĕк кĕтеслĕ çăлтăрĕ айĕнче манăн хушамата касса çырса хунă. Эпĕ иртнĕ кунсене аса илтĕм. Темиçе çул каярах, Хĕрлĕ Çара кайиччен, эпĕ Шупашкарти йывăç каскалакан завод çумĕнчи ФЗО шкулĕнче ĕçлеветчĕ. Çавăнта тунă пукансене эпĕ 1939 çултах Минск хулинче пурăнакан хамăн пиччене парнеленĕччĕ. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пичче Тăван çĕршывшăн çапăçса пуçне хунă, унăн пурлăхне оккупаци вăхăтĕнче нимĕç вăр-хурахĕсем çаратса тухса кайнă...

— Нимĕç çук-и çуртра?—ыйтрăм эпĕ.

— Вĕсем юнашар çуртăн подвалĕнче,— ответлерĕ автоматчик.

— Çурт хуçине тупса илсе килĕр,— приказ патăм эпĕ. Морозов автоматчик пӳлĕмрен тухса кайрĕ.

Пӳлĕмре эпĕ пĕчченех тăрса юлтăм, йĕри-тавра пăхса илтĕм. Кунта пукансем кăна мар, сĕтел çинче «Париж» тесе çырнă тĕрлĕ япаласем нумай. Пĕтĕм Европипех çаратнă нимĕçсем çинчен аса илсе, пуçа паркаласа илтĕм те шухăша кайрăм...

Ик-виçĕ минута иртнĕ çĕре автоматчиксем пĕр ватарах нимĕçе илсе те пычĕç. Вăл çак çуртăн хуçи пулнă иккен. Унăн сăн-пичĕ кăвакарса кайнă, сылтăм ури пăртак ухсахлать.

— Ку сĕтел-пукана ăçтан тупнă эсир?—ыйтрăм эпĕ нимĕçрен.

— Пирĕнтен инçе мар фабрика пур, çавăнтан илнĕ,—ответлерĕ вăл.

— Сирĕн фабрикăра ман хушамата ăçтан пĕлнĕ-ха апла? Ку пукан çине ман хушамата касса çырса хунă-çке?

Нимĕн калама пĕлмен нимĕç шуралса, кăвакарса кайрĕ.

— Каçарăр... тархасшăн каçарăр,— пăкăлтатрĕ вăл хăйĕн йытă чĕлхипе. — Каçарăр...» Урăх вăл нимĕн те калаймарĕ, хăранипе унăн пырĕнчен сăмах та тухми пулчĕ.

— Эх, йытăсем... Çаратса «çĕнĕ йĕрке» тăвакансем... — терĕ Морозов пуçа чиксе тăракан нимĕç çине пăхса...

Тепĕр самантран йывăр танксен колонни шоссе çулĕ çине тухса Германи еннелле, Берлин патнелле кайрĕ. Анчах колонна тухса кайиччен ротăри автоматчиксем пурте Шупашкарта тунă, нимĕçсем Минск хулинчен вăрласа тухнă пукансене кĕрсе курчĕç. Çав пукансенчен пĕрин çинче, пилĕк кĕтеслĕ çăлтăр айĕнче, манăн хушамата вуларĕç.

Эпир Хĕвеланăçнелле васкарăмăр. Кашни боецăн чĕринче çав вăхăтра фашистсен тĕп йăвине—Берлина хăвăртрах тытса илес ĕмĕт ялкăшса тăчĕ.

Лейтенант А. СТЕПЕРКИН.

Германи.

РЕСПУБЛИКĂРА ГОСУДАРСТВĂНА ТЫРĂ ПАМАЛЛИ ÇУЛТАЛĂКРИ ПЛАНА НОЯБРĔН 5-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

Районсем	плана тултарнă	Районсем	плана тултарнă
1. Вăрнар	107,5	16. Октябрьски	82,7
2. Етĕрне	100,0	17. Вăрмар	79,8
3. Сĕнтĕр	95,3	18. Куславкка	78,6
4. Красноармейски	94,0	19. Йĕпреç	78,6
5. Муркаш	93,7	20. Ишлей	78,5
6. Чурачăк	93,1	21. Канаш	78,3
7. Шăхасан	92,3	22. Комсомольски	76,8
8. Советски	92,2	23. Улатăр	73,7
9. Çĕрпӳ	91,8	24. Первомайски	73,4
10. Элĕк	91,5	25. Чкаловски	72,6
11. Сĕнтĕрвăрри	90,4	26. Хĕрлĕ Чутай	71,2
12. Шупашкар	89,2	27. Тăвай	66,1
13. Калинино	88,9	28. Çĕмĕрле	64,9
14. Пăрачкав	85,3	29. Шăмăршă	59,5
15. Елчĕк	85,0	30. Кувакино	46,6

Етĕрне районĕ государствăна тырă парса татнă

ЕТĔРНЕ, ноябрĕн 6-мĕшĕ. (ТЕЛЕГРАФ ПА). Районри колхозсем, Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, ноябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне государствăна срокчен тырă парса татрĕç. Халĕ планран иртерсе Хĕрлĕ Çар фондне тырă параççĕ.

ВКП(б) РАЙКОМĔН СЕКРЕТАРĔ А. СОМОВ.
РАЙИСПОЛКОМ ПРЕДСЕДАТЕЛĔ Н. ХРОМОВ.
НАРКОМЗАГАН РАЙОНРИ УПОЛНОМОЧЕННĂЙĔ К. АЛЕКСЕЕВ.

16 колхозра Ильич лампи çутатать

Красноармейски районри колхозсем Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче гидроэлектростанцисем тăвас енĕпе тимлĕн ĕçлерĕç. Районри Мăн Çавал, Шетмĕ, Сорм тата ытти шывсем çинче халĕ 16 электростанци тунă.

Именкассинчи электростанци вăйĕпе 8 ял колхозникĕсем, МТС-па район центрĕнчи учрежденисем усă кураççĕ.

Кăçал «Пятилетка», «Комбайн» тата Чапаев ячĕпе тăракан колхозсем электричество вăйĕпе авăн çапрĕç, çавна май ялхуçалăх çулне те ăнăçлăн вĕçлерĕç, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра парса татрĕç.

«Четай», «Шимар» колхозсен колхозникĕсем Сорм шывĕ çине хăйсен вăйĕпе электростанци туса лартрĕç.

Кусемсĕр пуçне «Чамыш», «Буксир» колхозсем кăçал Шетмĕ шывне пĕвелесе пĕве турĕç. Çак икĕ колхозра та юпасем лартса, пралуксем карса пĕтерне. Степан Разин тата Суворов ячĕсемпе тăракан, «Волга» колхозсенче те электричество пулать. Çак колхозсем те пралуксене карса çитернĕ.

С. ШАДИН.

411 пăт хăмла пухса илнĕ

Октябрьски районри «Красная Чувашия» колхоз кашни çулах пысăк тухăçлă хăмла туса илет. Кăçал çак колхоз 7,5 гектар çинчен 411 пăт хăмла туса илнĕ. Государство хăмлан кашни пентнерне 4,5 пентнер тырă вырăнне шутласа илет. 411 пăт хăмла туса панăшăн колхоза государство 100.000 тенкĕ укçа тата 30.000 тенкĕлĕх пусма-тавар панă, хăмла пăхса çитĕнтерес тĕлĕшпе ĕçленĕ колхозниксене 30.000 тенкĕ премн панă.

Кăçал Октябрьски районри «Восток», «Туйташ», «Звезда», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем те, пысăк тухăçлă хăмла туса илсе, хăйсен планĕсене ытлашшипех тултарнă.

Çĕрпӳ районĕнчи «Дружба», «Нива» колхозсем, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Верный путь» тата «Наука Ленина» колхозсем те хăмла планне пăхиччен ытларах туса илнĕ.

Республика государствăна хăмла памалли плана 120 процент тултарчĕ.

Колхозлă ялăн çыннисем

Çĕрпӳ районĕнчи Старак ялĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă Революциччен пуçламăш шкул кăна пулнă. Унта пурĕ те 30—40 ача кăна вĕреннĕ. Аслă шкултан тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисем пулман. 1930 çулта кунта вăтам шкул тунă. Çак вăтам шкулта Старак ялĕнчи тата таврари ялсенчи çамрăксем йышлăн вĕреннĕ. 15 çул хушшинче кăна Старак ялĕнчи 126 çын аслă тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухса тĕрлĕ специальноçсем илнĕ. Октябрьти Социализмлă Аслă Революциччен Скворцовсен çемьинче хут пĕлекенни пĕр çын та пулман. Совет влаçĕ çулĕсенче çак хуçалăхран 4 çын аслă тата вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă, Марфа — учительница, Иван — инженер, Егор—техник-землеустроитель, Семен—инженер-химик пулса ĕçлеççĕ. Александровсен çемьинче революциччен вăтам шкулта вĕреннĕ çын пулман, вĕсем чухăн пурăннă. Çак çемьери çынсенчен совет влаçĕ вăхăтĕнче пурте тĕрлĕ специальноçсем илнĕ. Петр—инженер-металлург, Семен—техник, Ефим—Хĕрлĕ Çар офицерĕ, Павел—доцент, Игнатий—агроном, Диомид—архитектор, Юлия—техник-строитель пулса ĕçлеççĕ. Çавăн пек çемьесем Старакра вуншарăн шутланаççĕ.

Старак ялĕнче Совет влаçĕ вăхăтĕнче тĕрлĕ шкулсенчен вĕренсе тухнă çынсем: 65 учитель, 12 инженер, 6 лесовод, 4 техник-строитель, 3 врач, 6 медицина фельдшерĕ, 30 землеустроитель, 5 бухгалтер, 6 плановик-экономист, 17 агроном, 3 механик, 7 тракторист. Отечественнăй аслă вăрçă çулĕсенче 21 çын офицер ятне илнĕ, вĕсенчен нумайĕшне орденсемпе медальсем парса наградăланă.

Çапла ĕнтĕ, Октябрьти Социализмлă Аслă Революци тивлечĕпе Старак ялĕ культурăллă ял пулса тăчĕ.



Ӳкерчĕк çинче: Югослави маршалĕ **И. Броз-Тито** хăйĕн кабинетĕнче.
Е. ХАЛДЕЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники)

Египет деятелĕсем короле чĕнсе калани

КАИР, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Фафд-эль-мысри» хаçат октябрĕн 30-мĕшĕнче сенаторсем пулса ĕçленĕ темиçе çыннăн, депутатсен, тĕрлĕ организацисен членĕсен, адвокатсен, коммерсантсен тата рабочисен король патне янă çырăвне пичетлесе кăларнă. Çав çырура çапла каланă: Египет хăйĕнчен тытса илнĕ правăсене каялла илесшĕн. Анчах хальхи правительство çав правăсене каялла илес тесе кĕрешме пултараймасть. Çавăнпа та халăх корольтен, ирĕклĕ суйлавсем туса ирттерсе, Египет прависене хӳтĕлеме пултаракан правительство туса хума ыйтать.

АНГЛИ ÇАРĔСЕНЕ ЕГИПЕТРАН КĂЛАРСА КАЙМА ЫЙТНИ

КАИР, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Аль-Мусаввар» хаçатра парламент членĕн Фикри Абазăн çырăвне пичетлесе кăларнă.

«Эпир Англи çарĕсене Египетран илсе тухма хистетпĕр,—тенĕ çав çырура. — Египет пĕтĕм тĕнчери пĕрремĕшпе иккĕмĕш вăрçăсем вăхăтĕнче хăйĕн пуянлăхне Англи аллине парса тăчĕ, вăл малашне те Англи союзникĕ пулса пурăнĕ, хăйĕн ытти государствăсем тĕлĕшпе илнĕ обязательствисене пурнăçа кĕртсе пырĕ. Çапла ĕнтĕ, Англи çарĕсене Египетра малашне тытса тăма нимĕнле сăлтав та çук. Египетра оккупаци режимне сыхласа хăварма тăрăшакансем çук, çав режима сыхласа хăварнине никам та килĕшес çук. Египет çыннисен чăтăмлăхĕ ик-виç уйăхран е ултă уйăхран пĕтсе ларса пăлхавсем сиксе тухсан, мĕн пулассине тавçăрса илĕр-ха. Эсир нумай çулсем хушшинче туяннине пĕтĕмпех çухатăр».

Çав хаçатра тата обществăллă ĕçсен министрĕн Абель Меджид Бадран статьине пичетлесе кăларнă, вăл статьяра та çавăн пекех ыйтнă.

КОРЕЙĂРИ ПАРТИСЕН ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕН МИТИНГĔ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Сеул хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Корейăри политикăллă партисен представителĕсен митингĕнче резолюци йышăннă. Çав резолюцире Корейăна никама пăхăнман çĕршыв туса хумалли çинчен каланă.

ВЕНГРИРИ СУЙЛАВĂН МАЛТАНХИ РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

БУДАПЕШТ, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Венгрире халăх пухăвне (парламента) суйланă. Вак çĕр хуçисен независимăй партийĕ, социал-демократсен партийĕ, коммунистсен партийĕ, хресченсен национллĕ партийĕ тата радикалсен партийĕ кашни хăйне уйрăм суйлав списокĕ тăратнă, гражданла-демократиллĕ партипе демократиллĕ халăх партийĕ иккĕшĕ те список тăратнă. Паян ир тĕлне Будапештра кама суйлании малтанхи итогĕсене палăртса хунă. Çав итогсем тăрăх, Будапештри суйлавçăсен 49,7 процентĕ вак çĕр хуçисен партийĕшĕн сасăланă, социал-демократсемшĕн—25,3 процент, коммунистсемшĕн — 21 процент, ытти партисемшĕн — 4 процента яхăн суйлавçă сасăланă.

Пĕтĕм Венгрире кама-кама суйланин официальнăй итогĕсене ноябрĕн 7-мĕшĕнче пĕлтерессе кĕтеççĕ.

БАРДОШИЕ ВĔЛЕРМЕЛЛЕ ТУНĂ

БУДАПЕШТ, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Будапештри радио пĕлтернĕ тăрăх, халăх сучĕ Бардоши Ласлона çакса вĕлермелле тунă.

МАННЕРГЕЙМ СТОКГОЛЬМА ПЫНĂ

ХЕЛЬСИНКИ, ноябрĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Хельсинкири радио çапла пĕлтерет: Финлянди президенчĕ Маннергейм хăйĕн врачĕпе пĕрле паян Стокгольма пынă. Вăл ноябрĕн 8-мĕшĕнче Швецирен Португалие тухса каять, унтан—Мадейра утравĕ çине. Мадейра утравĕ çинче вăл нумай вăхăт хушши сывалса пурăнмалла.

ИСПАНИРЕ 50.000 ГИТЛЕРОВЕЦ ПЫТАНСА ПУРĂНАТЬ

ОТТАВА, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Испани республикинче ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулса ĕçленĕ Альварес Дель Вайо Канада парламенчĕн членне çапла каласа панă: 50.000 нимĕç фашисчĕ ытла Испанире пытанса пурăнаççĕ, вĕсене Испани гражданĕсем туса хунă, тенĕ.

Çĕнтерӳçĕ-воинсем — колхоз ĕçĕнче

ЕТĔРНЕ. Хĕрлĕ Çартан демобилизаци йĕркипе киле таврăнакан çĕнтерӳçĕ-воинсене колхозсенче хаваслăн кĕтсе илеççĕ. Килĕсене таврăнакан воинсемпе вĕсен çемьисене тырă, выльăх-чĕрлĕх тата ытти япаласем парса пулăшаççĕ. «Комбайн» колхозра Хĕрлĕ Çартан таврăнакансене виçшер пăт апат-çимĕç продукчĕсем парса пулăшнă. Е. Шишкина П. Степанов воинсене пĕрер ĕне, М. Чернов, В. Чернов тата К. Корнилов воинсене сысна çурисем, хурт-хăмăр парса пулăшнă.

Кусемсĕр пуçне чылай колхозсенче кил çурта юсама пулăшаççĕ, çĕнĕ çуртсем лартса параççĕ. «Пионер» колхозра, сăмахран, Хĕрлĕ Çартан таврăнакан воинсен килçуртне юсама, çĕнĕрен килçуртсем тума 100 пăт тырă, 800 пăт улăм уйăрса панă. Хĕрлĕ Çартан иккĕмĕш черетпе таврăнакансене пулăшма икĕ ĕне, пăрусемпе сурăхсем уйăрса хатĕрленĕ.

Паллах ĕнтĕ, çĕнтерӳçĕ-воинсене ăшшăн кĕтсе илни вĕсен ĕçлес кăмăлне хăпартать. Вĕсем çĕнĕ вăйпа колхозри ĕçе хутшăнаççĕ, пысăк тухăçлă ĕçĕн тĕслĕхĕсене кăтартса параççĕ. «Комбайн» колхозри П. Степанов юлташ, вăл Хĕрлĕ Çартан таврăнни нумай пулмасть пулин те, ку тарана çитсе 70 ĕçкунĕ тума ĕлкĕрнĕ. «Пионер» колхозри Алексей Кудряшов, Михаил Данилов, Макар Смирнов воинсем киле таврăнсан икĕ кунтинах колхозри ĕçе хутшăнма пуçларĕç.

Алексей Кудряшов ниепле ĕçрен те пăрăнмасть: авăн çапнă çĕрте те, çĕрулми кăларнă çĕрте те, строительство ĕçĕнче те—ăна пур çĕрте те курма пулать. Кĕске вăхăт хушшинчех вăл колхозра 50 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе тунă. Халĕ ăна колхоз счетоводĕ пулса ĕçлеме уйăрса лартнă.

Петр Толстов, Федор Макаров воинсем вăрçăччен ĕçленĕ вырăнсенчех ĕçлеме тытăннă. Колхозра паллă конюх пулса ĕçленĕ орденоносец Лука Румянцев та киле таврăннă хыççăн çав ĕçех пуçăннă.

Ник. ЦВЕТКОВ.

ХĔРĔХ ПĔРРЕМĔШ ÇУЛХИ НОЯБРЬ КАÇĔ...

Халĕ ĕнтĕ фронтсем пĕтрĕç, тупăсем пеме чарăнчĕç, пăшал сассине те вĕренӳ хирĕсенче çеç илтме пулать, вăрçă ветеранĕсем хăйсен тăван ялĕсемпе хулисене таврăнаççĕ, вĕсем ĕлĕк çул хĕрринчи çăлкуçĕнчен шыв ĕçнĕ пекех, хăйсем хăнăхнă мирлĕ ĕçе, вăрçă сиенлесе хăварнисене пурне те юсаса ура çине тăратма хĕрӳллĕн тытăнаççĕ. Пирĕн ăрури çынсем нумайччен çак иртнĕ кунсене, пысăк та хаяр çапăçу пирĕн çĕршыва çурçĕртен пуçласа кăнтăра çити касса татнă вăхăта, совет воинĕсем хамăрăн Тăван çĕршывăн чыслăхне хӳтĕлесе хăварас тесе фашизма хирĕç паттăррăн кĕрешнĕ вăхăта аса илĕç.

Вăрçă чарăннă хыççăн мĕн чухлĕ ытларах вăхăт иртĕ, пирĕн умра эпир çĕнтернĕ çапăçусен пысăкăшĕ çавăн чухлĕ уçăмлăрах тухса тăрĕ, эпир тунă çĕнтерӳсен аслăлăхĕ çавăн чухлĕ уçăмларах паларса тăрĕ, Отечественнăй вăрçăн кашни страницине—хавасланне хурлăхли те, паттăррипе хĕн-хурли те—пирĕншĕн питĕ хаклă пулса тăрĕç.

Ак халĕ, эпир хамăрăн сутă Октябрь уявне çемьепе тата туссемпе пĕрле килте уявланă вăхăтра, эпĕ ăна 1941 çулхи йăвăр вăхăтра мĕнле уявланине аса илетĕп. Ун чухне эпир шăнса ларнă Атăл сыранĕнче, эпĕ çуралса ӳснĕ Калинин хули сывăхĕнче землянкăра ларатчăмăр. Калинин хули ун чухне нимĕçсен аллинччĕ. Землянкăна Кедведев капитан ертсе пыракан батальонăн командă пункчĕ вырнаçнăччĕ. Çак батальон Затверецье тулашĕнчи юлашки çуртсене тытса тăратчĕ.

Çакă йывăр вăхăт пулнă. Тăшман Мускав патне капланса килнĕ. Таçта Поваровăра нимĕçсем пирĕн столицăна тупăсемпе пеме бетонланă площадкăсем тăваççĕ, тесе калаçатчĕç. Анчах та капитан, совет çыннисен аслă йăли тăрăх, юханшывăн сулахай çыранĕнче нимĕçсенчен çирĕплетнĕ темиçе вырăна туртса илсе çĕршыва боевой парне кӳрсе уява чăннипе кĕтсе илме шутларĕ.

Туса пĕтерме ĕлкĕреймен кирпĕч заводĕ айĕнче вырнаçнă пĕчĕк землянкăра пăчă та тăвăр. Унта çав тери туртса тултарнă пирки кӳршĕн сăн-питне те палласа илме май çук. Эпĕ тула тухрăм. Витĕрех вĕрекен çил çĕр çумĕпе типĕ те чикекен юра хăвалать. Çав юр витĕр манăн тăван хула мĕнле çунни курăнать. Вăл ĕнтĕ тăваттăмĕш эрне çунать. Унăн урамĕсем тăрăх тăшман çӳрет. Çакă ĕнтĕ чĕрене кичемлĕх кӳрсе ыраттарать.

Сасартăк аялта, траншейăсенче шанса хытнă тăма тахшин аттипе капăртаттарса васкасах чупса иртсе кайрĕ. Хавхаланулла сасăпа такши кăшкарса ячĕ:

— Сталин! Сталин калать!

Эпĕ землянкăна кĕтĕм.

Ярăм-ярăм ярăнса çӳрекен кăвак тĕтĕм витĕр çынсем уйри рации тавра кĕпĕрленнипе аран-аран уйăрса илме пулать. Вĕсем, тĕплĕрен сасăпа шăхăрса уласа пирĕн передачăсене хуплама тăрăшса эфира пăсакан нимĕç чăрмавĕсене çĕнтерсе килекен лăпкă, хулăмрах та васкамасăр сасса итлеççĕ.

Сталин Мускавра! Çак пирĕншĕн кашнишĕн хаклă кун вăл трибуна çинче! Вăл хăйĕн халăхĕпе калаçать, унăн сасси кунта, малти линие, нӳрĕ те тĕттĕм землянкăна килсе кĕрет!

Эпир пĕр сăмах та сиктерсе хăварас мар тесе, сывлама та чарăнтăмăр. Землянкăра çав тери шăп: стена хушшинче шăши пиклетни те, тулта çил шăхăрни те, трибуна çинче стакана шыв тултарни сасси та илтĕнет.

Тăван та юратакан Мускавран килекен сасăра çав тери ăслă лăпкăлăх, çĕнтерĕве çирĕп шанса тăни илтĕнет. Çав сăмахсене илтнĕ хыççăн сасартăках чĕрери йывăрлăх çухалать, килсе тухнă инкек-синкек текех пусса тăмасть, пулас хăрушă йывăрлăхсем хăратса тăмаççĕ, вилĕм хăй те хăрушă мар.

«Нимĕç оккупанчĕсене нимĕнле каçару та пулма пултараймасть!

Нимĕç оккупанчĕсене—вилĕм!»—тесе янăраса кайрĕç Сталинăн татăклă сăмахĕсем. Пирĕн пата Мускавран килекен тăвăллăн алă çупнă сасă çак махорка тĕтĕмĕпе тулса ларнă землянкăра хĕрӳллĕн алă çупнипе пĕрлешсе каять.

Инçĕшне туйса тăни пĕтрĕ. Пире Сталин кунта, пирĕн умра тăнă пек туйăнать. Эпир залри çынсемпе пĕрлех пек туйăнать. Сталин арăсланпа кушак çури çинчен шӳт тунинчен ахăлтатсах кулатпăр. Вара хирти рации динамикĕнче: «пирĕн ĕç тĕрĕс ĕç, çĕнтерӳ пирĕнте пулĕ!»—тенĕ лăпкă та ăслă, шанчăк паракан сăмах илтĕнсен, эпир, землянкăрисем пурте, ура çине сиксе тăтăмăр та, хĕрсе кайсах алă çупма тытăнтăмăр. Батальон командирĕ аманнă аллине сулласа: «Сывă пултăр Сталин юлташ!»—тесе кăшкăрса ячĕ.

Тепĕр темиçе минутранах атакăна каймалли вырăна пытана-пытана ерипен пăхса тухакан взводсене цепь тăрăх пĕр боецран тепĕр боец патне Сталин Мускавра сăмах калани çинчен хыпар сарăлчĕ. Сталин сăмахне политрук васкаса каласа пани цепь тăрăх куçса улшăнать пулин те, сăмахăн аслă шухăшĕ, унăн хăвачĕ, хастарлăхăн хăвачĕ тата пирĕн тĕрĕс ĕç пурĕпĕрех çĕнтерессине шанса тăнин хăвачĕ чи хĕрринчи боец патне те çитет.

Тепĕр çур сехетрен сивĕ тĕттĕмлĕхе атакăна кайма чĕнекен ракета çутатса ярать. Сталин сăмахĕпе ăшăннă, Сталин сăмахне илтсе вăйлăланнă, шанчăк илнĕ салтаксем çилпе пульăсем шăхăрса тăракан тĕттĕм çĕр ăшне атакăна кĕрсе каяççĕ. Çурçĕр тĕлне, хаяр та кĕске çапăçу хыççăн, вĕсем Атăл хĕрринче тăшманран вунвиçĕ блиндаж туртса илеççĕ.

Вунвиçĕ блиндаж! Ирĕке кăларнă пĕтĕм участока, васкамасăр утсан та, пилĕк минут хушшинче пăхса тухма пулать. Анчах та ку—тăшманран çак вырăнта туртса илнĕ чи малтанхи Тăван çĕршыв татăкĕ—пĕтĕм батальона çак уяв каçхине хаваслантарать. Фляжкăсен пробкисене пăрса уçаççĕ. Консерва банкинчен тунă шуç куркасем алăран алла куçаççĕ. Çак кунччен каялла чакса пынин вăрăм та йывăр çулĕ тăрăх утса тухса ывăнса, шанса кайнă çынсем хушшинче уяв ячĕпе кӳнĕ пĕчĕк парнерен—Атăл сыранĕнчи тăшманран туртса илнĕ пĕчĕк çĕр татăкĕнчен, йĕкелрен шăтса хăватлă юман çитĕннĕ пекех,—пирĕн аслă Çĕнтерӳ çитĕнессине ĕненмен çын пĕрре те çук.

... Иртнĕ çул эпир хамăрăн Октябрь Революци уявне Висла шывĕ тепĕр енчи плацдарм çинче уявларăмăр. Ун чухне вăл пĕчĕк çĕр татăкĕччĕ çеç, унтан эпир Германи çине хăватлăн сиксе ӳкме хатĕрленеттĕмĕр. Ун чухне вăрмансем, тĕрмелĕхсем, варсем тăрăх вăй пырса тăратчĕ.

Уяв сĕтелĕ хушшине вăрçă ветеранĕсем пухăнса ларчĕç. Çакăнта пухăннă çынсен вăрçăра кашниннех хăйĕн кун-çулĕ пулнă, анчах вĕсем пурте каялла чакнин йывăр кунĕсенчен пуçласа юлашки икĕ çул хушшинчи пысăк çĕнтерӳсем патне çитме аслă та йывăр çула утса тухнă.

Çар çыннисем, яланхи пекех, вăрçăри ĕçсем çинчен, вăрçăри йывăр тапхăрсем çинчен каласма пуçларĕç, çапăçура вилнĕ юлташĕсене аса илчĕç. Вара темĕнле ăнсăртран 1941 çулхи ноябрь каçĕ çинчен каласма тытăнчĕç. Кунта пухăннисем пурте çав тери пысăк фронтăн тĕрлĕ вырăнĕсенче ун чухне Сталинăн сăмахне итленĕ иккен.

Сӳллĕ те хăйăлтатса калаçакан генерал-танкист Сталин докладне Украина хирĕнчи пĕр варта, хăйĕн команда пункĕнче итленĕ. Доклада командир машинин радистки йышăннă. Динамикке боевой башня çине кăларса лартнă. Танкистсем—сыввисем те, аманнисем те—машина тавра кĕпĕрленсе тăнă. Нимĕç самолечĕсем танк батальонĕ çĕр касма вырнаçнă вырăна касхинех шыраса тупнă. Вĕсем тӳпене хунарсем çакса янă та, çав хунарсен пăчлатса тăракан шупка çутинче тăшман самолечĕсем килсе тухнă. Вĕсем аялтан вĕçсе çӳресе танкистсене пулеметпа пеме тытăннă. Вĕсем вар тĕлĕнченех темиçе хутчен те вĕçе-вĕçе иртсе кайнă, анчах пĕр çын та аяккалла тарса пытанман. Çынсем командир машинин броня çумне хытăрах сыпăннă, тăшман моторĕсем кĕрленнипе шăвĕ витĕр Сталинăн сăмахне итлеме тăрăшнă.

Самрăк та хĕрӳ полковник, авиаци дивизийĕн командирĕн заместителĕ, Сталин сăмахне Мускав сывăхĕнчи хирти аэродромра итленĕ. Çав аэродромран çĕрлехи истребительсем доклад вăхăтĕнче, сывлăшри пиратсем пирĕн столицăна пырса тапăннине хăваласа яма, икĕ хутчен сывлăша çĕкленнĕ.

Военврач, кăтра та хĕрлĕ хĕр, пирĕн арçынсен хушшинчи пĕртен-пĕр хĕрарăм, çав доклада тăшман хупăрласа илнĕ Ленинградра итленĕ. Госпитальсенче аманнисем палатăсенче çеç мар, коридорта та выртнă. Çавăнтах нимĕç бомби пырса ӳкнĕ. Вăл темиçе вунă çынна вĕлернĕ. Çĕр çынна яхăн тепĕр хут аманнă. Доклад пуçланнă вăхăтра сурансене сыхмалли залра темиçе врач, тăшман бомби амантса хăварнă çынсене малтанхи пулăшу парас тесе, пĕтĕм вăйран тăрăшнă. Кунта аманнисем йынăшнă. Анчах та Сталин доклад тума пуçласанах, пурте шăпланнă, доклада итлес тесе, çынсем хăйсен суранĕсем çав тери ыратнине те мансах кайнă.

Врач каланине итлесе пĕтернĕ хыççăн пурте çав каçа аса илсе шухăша кайрĕç. Вара çурт хуçи—паллă летчик ура çине тăчĕ. Унăн паллă чаçĕ ун чухне пирĕн Висла тепĕр енчи плацдарма хӳтĕлесе тăратчĕ. Вăл нимĕн те каласа памарĕ. Вăл хрустальрен тунă бокала, хурарах тĕслĕ çăра эрех тултарнăскере, çĕклерĕ те:

— Апла пулсан, юлташсем, çав каç пире эпир Çĕнтерӳ тăвассипе калаçа паракаНнишĕн, халĕ пире çав Çĕнтерӳ патне илсе çитернĕ çыншăн ĕçер!—терĕ.

Вара эпир, Калинин хули сывăхĕнче ноябрь уйăхĕнчи сил-тăманлă каç консерва банкисенчен тунă шуç куркасенчен ĕçнĕ шухăшпа пек шухăш-кăмăлпах, Сталин юлташăн сывлăхĕшĕн ĕçрĕмĕр.

Б. ПОЛЕВОЙ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2-89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99. ... пайĕн—3-89, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.

НТ 00298 Типография № 1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59х42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.